27-101

ПĔТĔМ СОЙУСРИ КОМУНИССЕН (пол.) ПАРТТИЙĔ

Ç. П. ПЕТРОВ

# КОМУНИССЕН ПАРТТИН ЂĂВАШ ОПКОМ ПЎРОВĔН ĔÇĔСЕМ

ЂĂВĂШ ОПКОМĔН IV-мĕш ПЛЕНĂМĔНЂЕ ТУНĂ ТОКЛАТ

(Октапĕрĕн 5—8 мĕш)

П. С. К.(п) ПАРТИН ЂĂВАШ ОПКОМĔ КĂЛАРНĂ
ШУПАШКАР 1927 ÇУЛ

ПӖТӖМ СОЙУСРИ КОМУНИССЕН (поҫ.) ПАРТТИЙӖ

Ҫ. П. ПЕТРОВ

# КОМУНИССЕН ПАРТТИН ҪӐВАШ ОПКОМ ПӲРОВӖН ӖҪӖСЕМ

ҪӐВАШ ОПКОМӖН IV-мӗш ПЛЕНӐМӖНҪЕ ТУНӐ ТОКЛАТ

(Октӑперӗн 5—8 мӗш)

П.С.К (п) ПАРТТИН ҪӐВАШ ОПКОМӖ КӐЛАРНӐ

ШУПАШКАР 1927 ҫул

ОТПЕЧАТАНО В ТИПОГРАФИИ
ШКОЫ Ф. З. У. ЧЕБОКСАРЫ.
ЧУВАШЛИТ № 2113.
З А К А З № 28.
Т И Р А Ж 1250.

## Вăрçă хăрушлăхĕсем умĕнҫе ҫăваш ĕçхалăхĕ хăйĕн тĕреклĕхне тĕрĕслерĕ.

### ЙУЛТАШСЕМ!

Опком пӳровĕ ĕçĕсем çинҫен иртнĕ март уйăхĕнҫе анҫах каласа кăтартнăҫҫĕ. Унтан вара 5 уйăх ытларах вăхăт иртнĕ пулин те, пирĕн респуплĕкшĕн, пуринҫен ытларах, пирĕн парттишĕн питĕ пысăк ĕçсем пулса иртрĕç. Çак кĕске вăхăтра пулнă ĕçсем парттишĕн ҫи паллă вырăнта тăраççĕ. Мĕншĕн тесен çав иртнĕ йăвăр вăхăтра нихăçан пулман ĕçсем пулса иртрĕç.

Тĕнҫери лару-тăру йăвăрланса пынă вăхăтра, контрреволюутсиллĕ вăрçă хăрушлăхĕ çывхарса килнĕ вăхăтра, партти умĕнҫе çĕнĕрен пысăк ĕçсем тăнă вăхăтра,—парттири оппоçитси хăйĕн ĕçне пĕр минутлăх та ҫарма шутламасť. Çав йăвăрлăхсемпе усă курса хăйĕн оппоçитсиллĕ ĕçне вăйлатнă çемĕн вăйлатса пыраť. Çавсене пурне те аса илсен, иртнĕ вăхăтра пулнă ĕçсем пирки халăхăн тĕп шухăшĕсене пĕлсе тăрасси—пирĕншĕн ҫи кирлĕ ĕç пулса тăраť. Мĕншĕн тесен епĕр пурăнса иртернĕ ĕçсем хресҫенсенпе ĕçлекенсен шухăшĕсене тӳрри-паллипех кăтартса паҫĕç. Пирĕн партти çак иртнĕ вăхăтра ĕçлекенсемпе хресҫенсен тĕп шухăшĕсем хăш йеннелле сулăннине кирлĕ таран сиссе шута илме пултарса, хăйĕн ĕретне тĕреклетме пултарҫĕ-ши? Çапла вара пирĕн орканисатси хăйĕн ĕçне кашни кунхи ыйтусемпе çыхăнтарса пыҫĕ-ши.

Халăх тĕп шухăшĕсене мĕнле ĕçсенҫе лайăхрах куртăмăрши епĕр çак иртнĕ вăхăтра?

Тӳрри-паллипе кăтартса паракансем акă мĕнсем пулҫĕç: пулса иртнĕ Советсен суйлав кампанийĕ, Майăн 1-мĕшне уйавлани, Совет Сойусĕн Конституттутси кунĕпе Ҫăваш респуплĕкĕн йупилейĕ, „Сыхлăх ĕрнине“ туса иртерни, йалхуçайстви налокĕн ыйтăвĕсем, ытлашши укçана перекет

кассисене хуртарас кăмăлпа тунă кампппани, Хĕрлĕ Çара илни, ĕçйалкорсен çырăвĕсем, йулашкинђен тата, анђахрах пулса иртнĕ Советра ĕçлекен хĕрарăмсен сиесĕпе районсенђи Советсен сиесĕсем. Кĕскен каласан, çаксем ĕнтĕ Ђăваш респуплĕкĕнђи ĕсхалăхĕн политтĕклĕ тĕп шухăшĕсене пит аван кăтартса пађĕç.

Вĕсем тăрăх епĕр мĕн куратпăр? Пур фактсем тăрăх та епĕр халăхăн шухăшĕ пĕтĕмĕшпе пирĕншĕн, Совет влаçĕшĕн питĕ шанђăклине курса тăратпăр. Пирĕн ĕççыни Совет влаçĕ майлă çеç мар, вăл Совет Сойусне сыхласшăн хатĕр тăрат, контр-релођутсиллĕ вăрçă тухсан, ăна хирĕç сиксе тăма хатĕр. Кун çинђен пур йапаласем те шантарсах каласа параççĕ, кампаңисене иртернĕ ђух пулнă ĕçсем те пурте ăна лайăх кăтартаççĕ. Иртнĕ март уйăхĕнђе, çуркунне, çавăн пекех пулнă-ши? Çак иртнĕ çура та пулин çавăн пекех пулма пултарнă-ши. Ђăнахах ун пек пулман пуђ. Çуркуннерехпе Совет уђрештенисенђе тĕрлĕ йĕркесĕрлĕхсем нумай пирки хресђенсем хушшинђе килĕшӳллĕ мар йумахлакансем пурђĕ. Вăл калаçусем йалхуçайстви налокĕ тăрăх, кивçен панă вăрлăха кайалла илнĕ ђух, вăрмансене валеçсе панă вăхăтра, çĕр, йĕркелӳ ыйтăвĕсем тăрăх пулкаласа ирткелерĕç. Çавăн пирки те хресђенсем епĕр ĕçленĕ çĕрте тĕрлĕ çитменлĕхсене кура кăмăлсăр пулкаларĕç, тепĕр ђухне хыттăнах калаçакансене те курма пулатђĕ. Партти орканисатсийĕ çавна вăхăтра сиссе хăй ĕçне кирлĕ таран вăйлатрĕ. тĕрлĕ кăтартусем пађĕ, вара ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пынă майĕпе, çав калаçусем пĕте пуçларĕç. Йалхуçайстви налокĕ пирки татăклă кăтартса парсан, кивçен панă вăрлăха пуçтарнă ђух пулнă çитменлĕхсене пĕтерме хушнă хыççăн, халăх кăмăлланђĕ.

Анклђи Совет Сойусĕпе çыхăнса тăма пăрахсан контрревођутсиллĕ ĕçсем татах вăйланса кайрĕç. Вăрçă хăрушлăхĕ çывхарса киле пуçланă майĕпе, хресђенсем хушшинђе те тĕрлĕ сăмахсем сарăлђĕç. Партти çавна вăхăртрах сиссе илсе, хăйĕн ĕçне кирлĕ таран вăйлатрĕ. Халăх хушшинђе çакăн пек калаçусем çӳрекелерĕç: ыран пайан вăрçă пуçланса кайат тени, вăрçă пуçлансан Совет влаçĕ ђăтса çитерейместь, пирĕн техниккă йапăх, епĕр тĕреклех мар, тенисем пулкарĕç. Кунсăр пуçне тата,—епĕр, хресђенсем, хамăр та вăйланса çитей мерĕ мĕр, ĕçлекенсен пурнăçĕ хресђенĕнђен темиçе хут лайăхрах текен самахсене те тĕл пултăмăр.

Çавӑн пек килĕшӳсĕр сӑмахсем сарӑлнӑ хыççӑн, хӑшпĕр çынсем хӑраса ӳкнипе тĕрлĕ таварсем, çимелли йапаласем илсе хума тапратрĕç. Пĕр вӑхӑтра тата хӑшпĕр таварсене çителĕклĕ кӳменни те ĕçе нумай йӑвӑрлатса пӑрахрĕ, тул çӑнӑхĕ çитмен майĕпе, тĕрлĕ сӑмахсем тухса карĕç: тырпула йутпатшалӑхсене нумайрах йарса тӑраççĕ, Анкли пирĕнпе ан вӑрçтӑр тесе, тырра унта параççĕ, Амерĕк патшалӑхне те, пире ан тапӑнтӑр тесе, тырӑ панӑ, тата ытти çавӑн пек вырӑнсӑр сӑмахсене сарса çӳрекенсем пулђĕç.

Пире йуратманнисем кулаксем, хӑйсен пуçĕсене çĕклеме пуçларĕç, вĕсем те хӑйсен еçĕсене пуçарса йађĕç. Кулаксемпе пуп таврашĕсем Совета хирĕçле ĕçсем пуçарса йарса, халӑха хӑратса пӑрахма тӑрӑшрĕç. Çавӑн пек калаçкаланисем ийуђ уйӑхĕђђенех тытӑнса пыђĕ. Ийуђ уйӑхĕнђен пуçласа вара, халӑх пулса иртекен ĕçсем çинђен çителĕклĕ анланса илме пуçларĕ. Уйессенђе партти конферентсийĕсене туса иртернĕ хыççӑнах пур çĕрте те Совет Сойусĕн шалтипе тулти лару-тӑрувĕ çинђен халӑха ӑнлантарас кампани пуçланса кайрĕ. Вара çавӑн пек сӑмахсем путса лара пуçларĕç. Йулашкинђен вара татӑклӑ улшӑну пулђĕ. Ун пек йапала „сыхлӑх ернине“ туса иртернĕ хыççӑн палӑрђĕ. „Сыхлӑх ернинђе“ сыхлӑх ĕçне вайлатма укçа тенкĕ пуçтарнисĕр пуçне, халӑх хушшинђи кирлĕ мар сӑмахсене пĕтерни пит хаклӑ пулђĕ. Йут патшалӑхсенђе пулса иртекен ĕçсем çинђен хӑлӑха каласа парсан, халӑх кӑмӑлĕ уçӑлса кайрĕ. Х а љ х и в ӑ х ӑ т р а е п ĕ р х а л ӑ х х у ш ш и н ђ и п о л и т т ĕ к л е л а р у - т ӑ р у л а й ӑ х л а н н и н е, л а й ӑ х х и н е к у р а т п ӑ р.

Халӑх мĕнле шухӑшпа, мĕнле кӑмӑлпа пурӑни çинђен çакна каланипе çитет темелле, анђах епĕ тата ӑна тĕрлĕ фактӑсемпех ĕнентерсе калас тетĕп. Мĕн куратпӑр епĕр хаљхи вӑхӑтра? Войккӑв йулташа вĕлернĕ хыççӑн, Совет майлӑ хресђенсем, Совет Сойусĕ мĕне пӑхат̆-ши, мĕншĕн вӑл хӑй ирĕкне сыхлама сиксе тухмаст̆ши, çавӑн пек мӑшкӑлатарар мар, тесе сӑмахлакансем пулђĕç. Варшавра Войккӑва вĕлерни, Анкли мӑшкӑл ĕçсем туни урӑх ан пултӑр, ун пек ĕçсем тума тĕп тума хушӑпӑр. Епĕр хаљ вĕсене хирĕç тӑрса, хамӑр ирĕке çӑлма пултаратпӑр, теççĕ. Хӑшпĕрĕсем тата: вӑрçӑ хуçайствӑна йухӑнтарса йарат̆, йӑвӑрлӑхсем нумай кӳрет, тесе те калађђĕç. Çав вӑхӑтрах вĕсем: анђах

апитал пире вӑрҫма ҫыхӑнтаратӑ пулсан, епӗр Совет влаҫне арас ҫук, епӗр уншӑн хамӑр харӑс тӑрса кӗрешетпӗр, тетӗҫ. Мӗншӗн пирӗн влаҫ ним ђӗнмесӗр иртерсе йаратӑ-ши, екенсем те сахал марђђӗ. Ыттисем тата ӗҫлекенсенпе хресҁенсен правиттӗлстви килӗшӳллӗ, лӑпкӑ пурӑнӑҫ тытса тӑрасшӑн, малашне те вӑл вӑрҫма шутламастӑ, тесе лӑплантаратӑђӗҫ.—Совет влаҫӗ нихӑҫан та ухмах пулман, вӑл вӑрҫӑ ыйтуне хытӑ пелет, комуниссене мӗн вӗрентес, вӗсем ахалех мӗн тумаллине пӗлеҫҫӗ,—тесе калакансем пурђђӗ.

Ҫакӑн пек калаҫакансем хушшинђех тата Совета хирӗҫлекенсем те тупӑнаҫҫӗ, ӑна хирӗҫлесе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫапла майпа вӗсем халӑха хӑратса пӑрахма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем—Ђулхулара вӑрҫӑ пуҫланса кайрӗ, ҫӑкӑр-тӑвар илсе хурас пулатӑ, тесе халӑха ӗлкӗртсе пыраҫҫӗ. Кун пек сӑмахсене усламӑҫсем сарса йађӗҫ, вӗсем ҫавӑнпа усӑ курса, хӑйсен таварсене сутса услам илесшӗн ҫунђӗҫ. Хӑш-хӑш ҫӗрте ун пеккисем парттире тӑраканнисемпе те тавлашса, кӗрешсе пӑхма пикӗнеҫҫӗ. Хӑш ҫӗрте „Сыхлӑх ернине“ иртерме кансӗрлеме те пӑхнӑ. Ҫавӑн пек хӑтланнисене те хытӑ хирӗҫлерӗҫ.

Парттипе Совет влаҫӗн хаљхи политтӗкӗ пирки хресђенсем мӗнле шухӑшланине тӗрӗслеме ак ҫакӑ та кӑтартса тӑратӑ: хаљ пирӗн йалхуҫайстви налокне пухас ӗҫ тапранса карӗ. Йалхуҫайстви налокӗпе хресђенсем килӗшеҫҫӗ. Епӗр кунта ҫакӑн пек вӑхӑтсем те тӗл пулатпӑр,—хресђенсем, хӑйсен кӑмӑлӗпе, йалхуҫайстли налокне тӳлемелли вӑхӑт ҫитиђђенех тӳлесе татма та тӑрӑшаҫҫӗ, пӗтӗмӗшпе тӳлесе татакан йалсем сахал мар ӗнтӗ хаљ. Анђах кунта та уйрӑм кулаксем ҫак ӗҫе пӑсма тӑнисем пулкаланӑ. Ҫапах та ђухӑн хресђенсем кӑна пӑхса тӑмасӑрах йалхуҫайстви налйкне вӑхӑтра тӳлесе татма постановленисем йӑшӑнаҫҫӗ. Ђухӑн хресђенсем Совет влаҫӗн ӗҫӗсене пурнӑҫа кӗртме хастарлӑн тӑраҫҫӗ.

Халӑх хушшинђе тата натси политтӗкне тӗрӗс ӑнланайман пирки те йӑнӑш шухӑш тытакансем пулкалаҫҫӗ. Хӑш ђухне хӑш пӗр ӗҫлекенсем хамӑр респуплӗкре натси политтӗкне туса пырас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан йапаласенех ӑнласа илеймеҫҫӗ. Аппарата ҫӑмӑллатса пынӑ май епӗр нумайӗшне вырӑнсенђен кӑларатпӑр. Ҫавӑнпа та хӑш ђухне ҫапла калаҫҫӗ: ђӑвашсене вырӑн параҫҫӗ, вырӑссене

кăлараççĕ, т. ыт. те. Анђах кун пек шухăшлакансем çапах та нумайах мар-ха. Çакăн пек тĕрĕс мар шухăланисене вăхăтра шута илсе пырса, ун пек шухăшсене сирсе пыратпăр.

Халĕ ĕнтĕ ĕçлекенсен шухăшĕсем çинђен. Ĕçлекенсем пирĕн майлă шухăшлаççĕ. Вĕсем вăрçă мĕн пулас пулсан хатĕр пулассишĕн тăраççĕ. Çапах та уйрăм калаçусем пулкалаççĕ. Кун пеккисем—вăхăтра ĕç укçи паман пирки, ĕçлекенсем саккун тăрăх ыйтнисене туман пирки пулаççĕ. Ку ĕнтĕ вĕсем йенђен тĕрĕсех те. Тĕттĕм пирки кайра тăракан ĕçлекенсем йенђен вăрçăран хăраса тăнисем те пур. „Вăрçă пулать—пире нађар пулать,—влаç тытăнса тăраймасть“. Кун пек шухăш—хăравăç шухăш, анђах кун пек сайра хутра çеç пулаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илес пулсан — ĕçлекенсен шухăшĕсем тĕреклĕ.

Йулашкинђен пантитсем çинђен. Епĕр хамăр респуплĕке алăри пилĕк пўрнене пĕлнĕ пекех лайăх пĕлетпĕр темелле; кашни пантитах уйрăмăн—ăçта пурăннине, мĕн тунине пĕлетпĕр темелле,—çапах та пантитла ĕçсене епĕр хăвăртах пĕтерме майсем тупаймарăмăр-ха. Питĕ сарăлсах кайнă пантиттисăм пирĕн çук, пĕр ик-виç пĕђĕк ушкăн анђах пур. Анђах çак пĕђĕк ушкăнсемех çав тери хастарлăн ĕçлеççĕ. Тата тăп тăр кăнтăрлах тапăнса çаратусем туни, çынсене вĕлернисем, тата тĕрлĕрен йĕркесĕрлĕхсем тунисем пулнă. Ку тĕлĕшпе тем те туса пăхнă. Ку ĕçри тĕп ĕçлекенсем те хăйсен ĕçнетума пĕлеççĕ, вăхăтра кирлĕ çĕре вăй йама та пĕлеççĕ, анђах вырăнсенђе ĕç нађар тăнă пирки, ку таранђђенех пантит семпе кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлекенсене тĕппи йĕррипех вĕсем лайăххипе нађаррине сăнаса çитереймен пирки,—пантитсене тытас ĕç кашнинђех нађар пулса иртнĕ. Çакăн пеккисем те пулкаланă: çак ĕçре кирлĕ ĕçлекенсем, пантитсене хăвăртрах тытма кайас вырăнне, хăйсем тарнисем те пулнă. Çак ĕçе йертсе пыракансем ўсĕр пулнă пирки, кăтартнă вырăна вăхăтра çитейменни те пулнă. Çакăн пек йапаласем —ку тĕлĕшпе ĕçлекенсене лайăхрах сăнаса пăхманнинђен пулнă. Шанђаклă, тĕреклĕ, ĕçе тĕлне пĕлсе ĕçлекенсем пирĕн çителĕклĕ мар. Епĕр ку таранђђен пантиттисăма пĕтерейменни пуринђен ытла çак сăлтавсенђен пулса пынă, урăх кунта нимĕнле сăлтавах та çук. Ку мĕне пĕлтеретха? Ку, епĕр ку ĕçре ĕçлекенсем çине, çакăн пек ĕçсем пулађђен

çителĕклĕ таран пăхманнине кăтартать. Халĕ ку çитменлĕх сирĕлсех пырать.

Çакăн пек ĕнтĕ кĕскен каласан пирĕн республĕлĕн политтĕк ларутăрувĕ. Пĕтĕмпе илсен, политтĕк йенђен епĕр çирĕп тăратпăр. Ку ĕнтĕ пирĕн партти орканисатсийĕ хăйĕн ĕретне çĕнĕрен йĕркелесе тухма пĕлнине, строиттĕлствă йенђен те, пайан кунта пулса пыракан ĕçсене ăнлантарса, туса пырас йенђен те,—тĕрĕс йертсе пынине кăтартать.

Халĕ ĕнтĕ хуçайствă ыйтăвĕсем çине куçатăп. Хуçайствă ыйтăвĕсем йулашки вăхатра пирĕншĕн пушшех пысăкрах вырăн йышăнса тăракан пулђĕç. Пĕр йенђен—вăрçă хăрушлăхĕ пирки, тепĕр йенђен—хамăрăн шултра промышлĕннăçа хăвăртрах вăйлатса пымалла пирки. Партти Тĕпкомĕпе Тĕп контроль комиççин авкуст уйăхĕнђе пулса иртнĕ пĕрлешӳллĕ пленăмĕ, хальхи вăхăтра тĕнђер ларутăру ланса пынине шута илсе, çакăн пек кăтартса хăварђĕ:

„Тĕнђери лару-тăру улăшăннă майĕпе пирĕн хуçайствă умне хăйне уйрăм çĕнĕ сатађсем тухса тăраççĕ пулсан та, вăл çĕнĕ ĕçе—хуçайства хăпартса пырас тĕлĕшпе ку таранђђен пирĕн партти йышăннă прокраммăна улăштармасăрах, туса пымалла“, терĕ.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн ĕçри йăвăрлăхсене шута илсе, хамăр çĕршыва тĕреклетес ĕç ваљђи укçа тенкĕ памаллине шута илсе, партти Тĕпкомĕпе Тĕп Контроль Комиççи пленăмĕ каларĕ: вăрçă хăрушлăхесĕм тухса тăнă май, вăрçă ĕçне хатĕрленме ытларах вăйхăват хунă вăхăтрах, пирĕн çенĕрен хапрăк-сăвăтсем, ђукун çулсем, Слектритсă стансисем тăвас ĕçе ђакармалла мар. Ун вырăнне епĕр лăпкă вăхăтра 5-çул хушшинђе тумалли ĕç планне, хальхи вахăтра унран та хăвăртрах пурнăçа кĕртсе, 3—4 çулта туса пĕтермелле; вăл ĕçе йамалли укçа шутне те ђакармалла мар. Çакăнтан ĕнтĕ тирпейлĕх решимне тата тăртăшарах пурнăçа кĕртсе пырасси, пирĕн ĕçхалăхĕн аллинђи кăшт ытлашши укça тенке патшалăх кассине хуртарасси, тата ытти пысăк сатађсем тухса тăраççĕ. Парттин Ђăваш Опкомĕ çак вăхăтсене шута илнĕ, çак вăхăтсене шута илсех хăйĕн ĕç планне те тунă. Çаксене шута илсех Опком строиттĕлствăн тĕп планне пăхса тухрĕ; çаксене шута илнипе çак пленăмра Ђăваш Республĕкĕн хуçайствин контроль ђыхвăрĕсем çинђен токлат лартатпăр.

**Пирӗн йалхуҫайстви вӑрахӑн та пулин—ӳсетех.**

Йалхуҫайстви тӗлӗшӗнђен ҫак йулашки ҫулсенђе пирӗн мӗн пурха? Епӗ ку ыйту ҫинђе нумай ђарӑнса тӑмастӑп, м.т. контрођнӑй ђыхвӑрсем ҫинђен уйрӑм токлат тӑраӑ. Анђах хаш шухӑш ҫыхӑнӑвӗ тӗплӗрех пултӑр тесе, йалхуҫайствине палӑртакан тӗп ыйтусем ҫинђе ђарӑнса тӑратӑп.

1923-мӗш ҫулпа танла штарсан,тырпул акса тӑвакан ҫӗр хисепӗ кӑҫалђђен 43% ӳсрӗ. Кӑҫалхи тырпул тухӑҫӗ те пӗлтӗрхипе танлаштарсан ђылай ӳсрӗ. Кӑҫал пирӗн тырпул 18.500.000 пӑт тухнӑ, пӗлтӗр—17.500.000 пӑт пулнӑ.

Ҫавӑн пекех, выђӑх-ђӗрлӗх усрас ӗҫре те ӳсӗнӳсем пуррине куратпӑр. Лаша выђӑх ҫак ҫулта—5,97% хутшӑннӑ, ӗне выђӑх—0,89%. 1916-мӗш ҫулпа шутласан—пирӗн лашасен хисепӗ вӑл ҫулхи виҫене ҫитсе ларнӑ, ӗнесен шуђӗ—96,6% ҫитнӗ (ђӑнах та, ђыхвӑрсене пирӗн хытӑрах тӗрӗслемелле, м. т. ђыхвӑрсем тӗлӗшӗнђен пирӗн ӗҫсем нађар тӑраҫҫӗ. Тӗрлӗ ветӑмствӑсенђен мӗн ђухлӗ ђыхвӑрсем ытларах илен, ҫавӑн ђухлӗ ђыхвӑрсем хирӗҫсе кайаҫҫӗ, хӑш ђыхвӑра илме те аптраса тӑран).

Ҫӗрйӗркелес ӗҫе 75% ҫӗр ҫинђе туса ҫитернӗ. Малашне ҫӗр йӗркелес ӗҫ майперех кайаӑ. Ҫӗре пӗтӗмпех пӗркелес ӗҫ нумай ҫула тӑсӑлӗ. Ђухӑн хресђенсене ҫӗр йӗркелеме 48.000 тенкӗлӗх пулӑшнӑ, тата кайалла тавӑрса памалла 15.000 тенкӗ кивҫен панӑ.

Халӗ ӗнтӗ йалхуҫайствине машшинласси ҫинђен. Кунта пирӗн малалла шуҫнисем пурши? Ђыхвӑрсем, ку тӗлӗшпе малалла кайни ҫинђен калаҫҫӗ. Кӑҫал 6.590 плук сутнӑ, авӑн ҫапакан машшинсем 66, тырӑ сӑвӑрмалли машшинсем 68, тата ытти тӗрлӗ машшинсемпе пӗрле пурӗ 10.759 машшин сутнӑ. Паллах, ку сахал, анђах пирӗн плуксем нумайланма пуҫларӗҫ пулсан, кӑҫал вӗсене 6 пинтен ытларах сутнӑ пулсан, ку ӗнтӗ хресђенсем хӑйсен хуҫайствинђе ҫӗре лайӑхлатас ӗҫе тытӑннине кӑтартаӑ.

Тепӗр йенђен тата, епӗр ђыхвӑрсенђен ҫакна куратпӑр: ҫак машшинсене ҫуррине ытла (54%-не) копперативсем урлӑ салатнӑ. Ку пирӗншӗн лайӑх йапала. Ытти 46% лекнине халӗ пелейместпӗр, анђах ҫурри ытла копператтивсене лекет пулсан, пирӗн халӑха копператсилес ӗҫ майпенех ӳссе пыраӑ.

1926-мӗш ҫулђђен кашни 100 хуҫайствӑ пуҫне 6 плук тивнӗ, халӗ 18 плук тивет. Ҫакӑн пек ӗнтӗ кӗскен каласан, хресђен хуҫайствине машшинлас ӗҫ ӳссе пынике кӑтартакан ђых-

вăрсем. Трактăрсем ултта çеç çитеççĕ. Çак пĕђĕк ђыхвăрсем пирĕн йалхуçайстви майĕпен те пулин ÿссе пынине кăтартаççĕ.

## Совхоссем.

Пирĕн совхоссем пурĕ те 6 çеç. Епĕр ку ыйту патне тĕплĕрех пырса пăхма пуçларăмăр. Опком пӳровĕн ларăвĕнђе те ку ыйтăва пăхса тухнă. Ку таранђђен пулса пынă пур çитменлĕхсене те палăртса, çак çитменлĕхсене пĕтерсе, çитес кĕске вăхăтрах совхоссене вăйлатма кăтартусем панă. Совхоссем вĕсем—кăтартуллă хуçайствăсем пулмалла, вĕсем йал-хуçайствинђе сотсиалисăм пуçламĕшĕсем пулмалла. Епĕр ку таранђђен совхоссем çине сахал пăхнă. Ун çинђен çаксем те лайăх кăтартса тăраççĕ, çак йулашки вăхăта çитиђђенех совхоссем алăран алла куçнă, 1918-мĕш çултан пуçласа 1920-мĕш çула çитиђђен вĕсем Хусанта та, Йетĕрнере те, Çĕрпӳре те, Шупашкарта та, Оплăçри Çĕруправленийĕнђе те, уйесри çĕр управленийĕнђе те, пулса пăхпă 1926-мĕш çулта тин вĕсем хăйсене вађђи вырăн тупаççĕ. Çакăн хыççăн ĕнтĕ паллах, совхоссенђе мĕнле ĕç пулма пултарни. Пирĕн респуплĕкре тĕп хуçайствă—çĕр ĕç хуçайстви пулсан, ытти ĕçсене пăрахсах, çак ђылай катартуллă ĕçе тытăнмалла пулнă. Ку ĕç çине ĕçлекенсем тупас йенђен те, укçа тенкĕ тупас йенђен те лайăхрах пăхмалла пулнă. Совхоссенђе хађхи вăхăтра та тĕрлĕрен çитменлĕхсем, хуçайствăна йĕркесĕр тыткаланисем пур пулсан та, хуçайствă йенђен нађар пулсан та пирĕн совхоссенђе нумай лайăх йапаласемех пур. Ђи малтан—совхоссем нумай пусуллă хирсем туса пĕтернĕ. Ку пирĕн респуплĕкшĕн пĕђĕк ĕçех мар. Кусемсĕр пуçне унта вăрлăхсем хатĕрлеççĕ, тымар çимĕçсем акса тăваççĕ, тырпул нумайрах тухăçлă тăваççĕ. Сассурски совхосра пĕр теçеттин çĕртен 121 пăт сĕлĕ туса илнĕ, йунашар хресђен уйĕнђе сĕлĕ теçеттинра 61 пăт çеç илнĕ. Кусемсĕр пуçне тата унта выђăхсене лайăхлатнă, т. ыт. те. Епĕр çаксене пурне те шута илсе кирлĕ орканисатсисене кăтартусем патăмăр. Малашне ĕнтĕ Опкомăн постановленийĕсене пĕр пăрăнмасăр пурнăçа кĕртсе пыни кирлĕ.

## Ушкăнлă хуçайствăсем.

Халĕ ĕнтĕ ушкăнлă хуçайствăсем (колхоссем) çинђен. Епĕ вĕсем çинђе нумай ђарăнса тăмастăп, м. т. вĕсем çинђен иртнĕ 3-мĕш пленăмра уйрăм ыйту пулнăђђĕ. Çакăнтан ĕнтĕ

Опком колхоссем çине мĕнле пăхни лайăх курăнаť. Опком ку ыйтăва тĕплĕн сӳтсе йавнă, нумай çитĕнӳсем палăртнă, çитменлĕхсене кăтартнă. Унтах çакăн пек йурăхсăр ĕç пулнине палăртнă: колхос йађĕпе уйрăм хуçайствăсем сарăлма пуçланă. Пирĕн хăш пĕр колхоссенђе тăракан парттийтсăсем пример кăтартса ĕçлемеççĕ çеç мар, йалхуçайстви копператси ђленне те кĕмеççĕ. Çапла майпа парттире тăман хресђенсене мĕнле майпа йалхуçайстви копператсине кĕртме пулĕха? Ушкăнлă хуçайствăри çынсем ĕçлемесĕр улпутсем пек çĕртен тупăш илсе пурăннине ђăтма пултараймастпăр. Çак йулашки вăхăтра пĕр колхоса сăнаса тухнă хыççăн, ытла та тискер ĕçсем палăрђĕç: колхоса Шупашкартан уйрăм партти ђленĕсем йертсе пынă. Вĕсем унтан колхоса кама илме йурани, кама илме йураманни çинђен кăтартусем парса тăнă, ăна кăна илес пулсан, ăçта каймаллине кăтартса тăнă. Унта 20 çынна 200 теçеттин çĕр тивет. Таврари хресђенсем ним тума пĕлмесĕр тĕлĕнсе тарăхаççĕ, колхосра нийепле кăтарту тавраше çук. Пуринђен ытла, ку колхоса йертсе пыракансем парттийтсăсемçкеха? Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем пулаççĕ колхоссенђе халђхи вăхăтра та—Октăпĕр револђутси пулни 10 çул тултарнă çĕре. Ку ĕçе хăвăртрах тĕпђесе тухса, йĕркесĕрлĕхсене пĕтерĕпĕр.

Çав çитменлĕхсем пиркийех пирĕн колхоссем сахалланса йулђĕç. 120 колхосран Ђăвашпроисвотсойуса кĕрекен 46 колхос тăрса пулђĕ. Пленумра епĕр кун çинђен каларăмăр анђах кун пек йĕркесĕрлĕхсем 3-мĕш пленăм хыççăн тин палăрђĕç. Çакăнтан ĕнтĕ ушкăнлă хуçайствăсем çине мĕнле пăхмалли курăнса тăраť. Колхоссем вĕсем ђухăн хресђенсене йалхуçайстви копператсине кĕртсе пыракан йађейккăсем пулмалла. Йалхуçайствине хăпартма паракан укçа тенке йе ђăнах та ђухăнсен хуçайствине хăпартса пырас тесен, ђухăнсене йалхуçайстви копператсине кĕртсе пырса, ушкăнлă хуçайствăсене ӳстермелле. Çакăн çине хытăрах пăхас пулаť. Опком кăтартса панисене пурнăçа кĕртес пулаť.

## Йалхуçайстви копператсийĕ.

Октăпĕрĕн 1-мĕш кунĕ тĕлнелле йалхуçайстви копператтивĕсем пирĕн 135 шутланаççĕ. Ђленсен шуђĕ пĕлтĕрхинђен 25 прођ. ӳсне. Çакăнтан копператсилес ĕç малалла

пыни курӑнат, ҫапах та питӗ вӑрахӑн шӑват. Кил тӑрӑх танаштарса пӑхсан пӗлтӗр 14,12% ҫеҫ коппературсиленнӗ пулнӑ, кӑҫалхи Октӑпӗр тӗлӗнҫи шутпа кӑшт ытларах, ытти вырӑнсемпе танлаштарсан ку питте сахалха. Сӑмахран, Украйнӑра 30 проҫ. коппературсиленӗ.

Хаҫ коппертивсен тӗп капиталӗ пирки. Пирӗн респуплӗкре пӗр йулташлӑх пуҫне 3.775 тенкӗ тивет пулсан, ҫав вӑхӑтрах Совет Сойусӗпе пӗтӗмӗшпе илсе пӑхсан—4.081 тенкӗ лекет. Ку тӗлӗшпе епӗр кайра тӑратпӑр. Ҫапахта епӗр те ҫулран ҫулах малалла шӑварпӑр: кӑҫал пӗр йулташлӑх пуҫне капитал 134% ӳснӗ, пай укҫи пӗлтӗрхинҫен 275% ытларах пухӑннӑ. Пай укҫи пӗлтӗр кашни йулташлӑх пуҫне 173 тенкӗ тивнӗ пулсан, кӑҫал 621 тенкӗ тивет. Ку тӗлте пирӗн пӗр ҫарӑнмасӑр вӑл ӗҫсене тата малалла йарас тесе, пикӗнсе ӗҫлес пулат. Вӑл ыйтусем ҫине хытӑрах пӑхса ҫленсен шутне ӳстерни кирлӗ. Вӗсенҫе ӗҫлеме ӗҫе пӗлсе ӗҫлекен ҫынсене хатӗрлес пулат. Вара ҫӑн ҫӑнах хресҫенсен массине коппературси тавра ҫавӑрӑпӑр, хамӑрпа пӗрле йертсе пырӑпӑр.

## Йалхуҫайстви панкки хресҫен хуҫайствине вӑйлатас ҫӗрте ҫи пысӑк тӗкӗ пулса тӑрат.

Йалхуҫайстви панкки урлӑ Совет влаҫӗ йалхуҫайствине малалла йама пулӑшса тӑрат. Анҫах кунта патшалӑхран паракан укҫа сахал. Ҫавӑнпа йалхуҫайстви ӗҫне вӑйлатма, ӑна урӑхлатса лайӑхлатма, ушкӑнпа ӗҫлесе пурӑнмалла тума, —йалхуҫайстви панккине хресҫенсен хӑйсен ытларах укҫа хумалла. Вӑл тӗлӗшпе ӗҫсем лайӑхах пымаҫҫӗ. Йалхуҫайстви панккине пӑхӑнса тӑракан орканисатсисем нумайах мар. Пӗлтӗр—45 пулнӑ, кӑҫал 53 ҫитнӗ. Ыттисем йалхуҫайстви панккипе ҫыхӑнса тӑмаҫҫӗ. Вӑл ӗнтӗ ҫав йӗркепе сахалтарах ӗҫленине пӗлтерет. 223 йахӑна шутланакан тӗрлӗ йулташлӑхсемпе колхоссенҫен йалхуҫайстви панккин ҫленӗнҫе 37% ҫеҫ тӑрса ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Ыттисем ҫленра та тӑмаҫҫӗ. Ҫавӑн пек пулсан йалхуҫайстви панкки хӑйне тивӗҫлӗ ӗҫсене туса пыма пултарат-и? Паллах, пултарас сук. Ҫавӑн пек вырӑнлӑ ӗҫсем ҫине епӗр кирлӗ таран пӑхмастпӑр. Иртнӗ ҫул й/х панкки пӗтӗмпе 1.300.000 тӗнкӗ укҫа салатнӑ. Кун ҫул укҫа йалхуҫайствине малалла йама сахал мар вӗт. Епӗ хаҫ ҫав укҫа мӗнле ӗҫе кайнине кӑтартасшӑн. 1923—24-мӗш ҫулта кантӑр-

йётён акса тума 3% панă; 1924-25-мёш çулта-6%; 1925-26-мёш çулта—1,6%, йулашкинђен 1926—27-мёш ç. 3.4%.

Йалхуçайстви машшинёсене илме кивçенле панă шутран 1923—24-мёш çулта—2% панă, кайранхи çулсенђе 1% кайа парса пынă, кăçалхи çул 0,2% çеç.

Çёр йёркеленё çёре кăçал 1,1% панă пулсан, пёлтёр 1,2% панă пулнă.

Алăсти промышлённăçне вăйлатма 1923—24-мёш ç.—18% панă; 25—26 мёш ç.—5%; кăçалхи çул—2%. Çапла майпа епёр ђи кирлё çёре çултан çул сахалтарах парса пынине асăрхаса илетпёр. Çавăнпа та ђи хаклă вырăнта тăракан йенсем çине пăхма хушас пулаť, çав ёççене тума кивçен памалли укçана ўстерсе пулаť.

Укçана кивçенле валеçсе панă çёрти çитменлёхсем те сахалах пулман. Ђухăнсене парса пулăшас вырăнне пуйанрах пурăнакансене парса пулăшни те пулнă. Кивçен илнё укçана мён тума панă ёçе тунă çёре йаман. Хăйсен ёçне лайăх йёркелесе пырайман, мён мён ёçленине уђђота илсе пырайман. Çитменни çине вырăнсенђе йулташлăхсем кирлё таран пулман. Ку ыйтусем тăрăх Опком хытă ёçлерё, тёплён пăхса тухса, çитменлёхсене палăртрё, вёсене пётерме çул кăтартса пађё.

Йалхуçайстви панккин хăй йулташлăхёсемпе перекетлеме укçа тенкё нумайрах хуртарма тăрăшмалла. 1924—25-мёш çулта перекетлеме хунă укçа 11500 тенкё шутланнă, кăçал нумайрах 41.300 тенке çитет. Ку тёлёшпе малалла утатпăр пулсан та, ёлёкхине çитейместпёр. Вăрçăђђен ун пек укçасене мёљйуншарăн шутланă. Çавăнпа халђхи ђыхвăр питё пёђёккён курăнаť.

1924—25-мёш çулта кашни ђлен пуçне перекетлеме хунă укçа шуђё пёр тенкё тивнё, кăçал 1 тенкё те çурă. Пётём укçа шутёнђе çав укçа шуђё пёлтёр 1,7% йăшенса тăнă, кăçал—2,2%. Ку çапах та нумайах мар. Çакăнтан епёр йалхуçайстви панкки пур ёçе те çителёклё туса пырайманнине куратпăр.

**Ђухăнсене пулăшасси.**

Ку ыйту тăрăх II-мёш пленăмра уйрăм токлат итлесеттёмёр. Тёрлё çитменлёхсене çийеле кăларса, ђухăнсене пулăшас ёçе вăйлатма хушса хăварнăђђё.

Ђухăнсене пулăшма кашни çулах ђылай укçа тенкё параççё. Пёлтёр ђухăнсене 185.218 тенкё кивçен парса пулăш-

нă. Çĕр йĕркеленĕшĕн тўлемелли укçана 39.000 тенкĕ каçарнă, кăçал вăл шутпа 48.400 тенкĕ укçа парса пулăшнă. Кăçалхи çул йалхуçайстви налокне ђухăнсенђен 176.090 тенкĕлĕх илмелле мар тунă, мĕн пурĕ хуçайствăран 50% пађах налукран хăтарнă.

Патшалăх йенђен ђухăнсене çавăн пек пулăшу парса тăни, унăн пурнăçне лăйăхлатасшăн тăрăшса ĕçлени, вăл йĕркепе пысăк ĕçсем туни пурте оппоçитсин йăнăш шухăшĕсене тĕпĕ йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкаççĕ. Анђах тепĕр ђух тĕлне пĕлсе ĕçлеме пĕлмен пирки уйрăм йăнăшсем пулкалаççĕ. Епĕр вĕсене пытарасшăн мар. Пур ђăрмавсене ĕçленĕ çемĕн сирсе пырса, ĕçе малалла йарас тетпĕр.

## Çураки мĕнле иртрĕ.

Çуракине лайăх иртерес тесе мĕн тунă-ши? Хресђенсене вăрлăх парса пулăшас шутпа 150 пин пăт Мускавран тырă илес тенĕђђĕ. Унтан пама сăмах пађĕç, анђах кайран илес мар терĕмĕр. Мĕншĕн тесен, парассине те вăхăт иртсе кайсан пама пулђĕç, кайран аксан шăтса та тухмĕ терĕмĕр. Çапла майпа хамăр вăрлăхпах акса вырса илмелле пулђĕ. Çураки кампанине çавăн пек иртерсе йатăмăр.

Çапах та Çĕрĕç Комиссариађĕ çураки кампанине лайăхрах иртерес ĕçре кайарах йулса пырса ĕçленĕ, вăрлăх парса пулăшас пирки те нимĕн те туман. Çураки кампани çине пĕр йенђен çеç пăхас çук. Ун ђухне те тĕрлĕ ĕçсем сиксе тухаççĕ: вăрлăха тасатса акасси, машшинсем йаракан пунктăсен ĕçĕсене вăйлатасси, ђухăнсене тырпул акма пулăшасси, ђухăнсене пухса тырпула мĕнле акса тусан лайăх пулни çинђен канашласси т. ы.

Кĕркуннехи ыраш аки кампанийĕ татах йапăх иртрĕ, кун пирки те Çĕрĕç Комиссариађĕ кайран тапранса тухрĕ.

## Кивçенле панă вăрлăха кайалла пухас ĕç.

Есĕр пурте çав кивçен шутпа панă вăрлăха кайалла пухнă çĕрте тĕрлĕ кирлĕ мар ĕçсем пулни çинђен пĕлеттĕр пуђ. Вăл йапала вырăнти советсене çўлтен кирлĕ таран ăнлантарса паманнинђен пулђĕ. Çавăн пирки те çав вăрлăха тўлеме пултарнисенђен те, тўлеме пултарайманнисенђен те шăйăрнă. Çавăнпа та хресђенсем хушшинђе килĕшўсĕрлĕхсем пулкаларĕç.

Епӗр ку ыйтусем тӑрӑх ӗҫленӗ. Хӑй вӑхӑтӗнђе партти йенђен те, Совет йенђен те пӑхса, кӑтартусем панӑ. Ҫапах та кунта ҫитменлӗхсем пулнӑ, малтанлӑха ӗҫ ҫав тери вирлех пырайман. Кӑҫалхи ҫул пирӗн кивҫен панӑ вӑрлӑха тата 625000 пӑт пуҫтармалла. Вӗсенђен 572.389 пӑтне вырӑнтах хӑвармалла, ђенттӑра йама 52.661 пӑт пуҫтармалла. Ҫак вӑрлӑхсене пустарас тӗлӗшпе Ҫӗрӗҫ Комиссариађӗ татӑклӑрах ӗҫлеме пуҫлассине шанса тӑма пулаӗ, пирӗн орканисатси те вӑрлӑх пуҫтарма вӑй ҫитерӗ.

## Йалхуҫайстви налокӗ.

Йалхуҫайстви ыйтӑвӗсенђен йулашки ыйту-йалхуҫайстви налокӗ. Йалхуҫастви налокне пуҫтарас пиркимӗн калама пултаратпӑрха? Финанс Комиссариађӗ кӑтартнӑ тӑрӑх, пӗлтӗр епӗр йалхуҫайстви налокне кирлӗ виҫерен 2,5% ытларах пуҫтарнӑ. Ку кампани мӗнле иртнӗ? Есӗр астӑваттӑр пуђ, епӗр пӗлтӗр ку кампанине кайа йулса пуҫланине. Ҫул пӑсӑлса кайни, т. ыттисем те ку ӗҫе ђылай йӑвӑрлатрӗҫ. Ку ыйту пирки Советсен 2-мӗш сйесӗнђе те калаҫмалла пулђӗ. Налока пухас ӗҫе вӑйлатмалла тесе йури кӑтартусем те памалла пулђӗ. Йулашкинђен, кайа йулса та пулин, налика пуҫтарса пӗтертӗмӗр.

## Кӑҫалхи йалхуҫайстви налокӗ.

Кӑҫалхи ҫул налук 566.551 тенкӗ хума шутланӑ. Вӗсенђен 35%-не ђакараҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫул пуҫтармалли налок пӗлтӗрхинђен 9,7% кайа пулаӗ. Кӑҫалхи ҫул налок йӑвӑрлӑхӗ кашни хуҫайствӑ ҫине 2 т. 41 пус ӳкет, пӗлтӗр — 2 т. те 49 п. Пӗлтӗр йетак пуҫне 51 пус тивнӗ, кӑҫал—50 пус. Ҫак йапала — йалхуҫайстви налокӗ йӑвӑрах марри ҫинђен калаӗ Пирӗн политтӗкре йалхуҫайстви налокӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраӗ. Епӗр йалхуҫайстви налокӗ урлӑ пуйанрах пурнакан хуҫайствӑн ӳсӗмӗн майне йӗркелесе пыратпӑр. Йалхуҫайстви налокне йӗркеллӗ илсе пырса, ӑна йӗркелесе пырса, епӗр кулаксене ытлашшийех иртӗнсе кайма памастпӑр, кулаксенђен хаймине вӑхӑтра кирлӗ таран сӳсе пыратпӑр.

Йалхуҫайстви налокне пухас тӗлӗшпе кӑҫал каллех ӑнлантарас тӗлӗшпе малтанах ҫителӗклӗ таран ӗҫлеймерӗмӗр. Ку тӗлӗшпе ҫӗнӗрен хушса кӑтартусем панӑ. Хађхи вӑхӑтра епӗр ҫине тӑрсах йалхуҫайстви налокне вӑхӑт ҫитеђђенех

тӳлесе таттарас тесе тăрăшатпăр. Ку таранђен ĕнтĕ налока пĕтĕмпех тӳлесе татнă йалсем те пур. Анђах ку ĕçре хăш пĕр партти ђленĕсемех, (ахаљ партти ђленĕсем те мар, уйесри партти комиттеђĕн ђленĕсемех) йалхуçайстви налокне пухас ĕçе мĕншĕн васкаса тумаллине ăнласа илейменнисем пур. Пĕр уйесри партт̆и комиттет ђленĕ калаť: йалхуçайстви налокне хăçан хывмаллине кăтартса панă çирĕп саккун пуртăк, мĕншĕн вăхăтђен хывтармалла, вăхăтсăр налок пуçтарма пуçласан, хресђенсем: есĕр саккунсем çыраттăр та, вăл саккунсене пурнăçа кĕртместĕр, тесе калама пултараççĕ. Хресђенсене налок тӳллеме ирĕк парăр. Хăçан тӳлес тет, çавăн ђухне тӳлет—тет.

Çакăн пек калани вăл, тен вăл пĕлмесĕртерех калаť, кулаксен йуррине йурлани пулаť. Пĕлсе калаťи, пĕлмесĕр калаťи, анђах вăл кулаксен сийĕ тăвас тенине тăваť. Ђухăн хресђен налока вăхăтра тӳлет. Ђухăнсенђен хамăр та налок нумайах илместпĕр. Налока нумайтарах пуйансемпе кулаксем тӳллеççĕ. Налока мĕн ђухлĕ маларах тӳленĕ, çавăн ђухлĕ лайăхрах. Çавăнпа та кун пек шухăшлани — сийенлĕ йапала. Ку хутран ситрен пулнă йапала, анђах кунпа кĕрешес пулаť. Пирĕн налок хаљхи вăхăтра малтанхи срокра пухăнмалла çĕре 20% çеç пухăнни питĕ нађар йапала. Ку сахал. Налок хăй те нумайах мар. Хресђенсем хăйсем те, епĕр пĕлнĕ тăрăх, кăçалхи налокпа кăмăллă. Çакăнтан ĕнтĕ, хресђенсене хăйсенех налока вăхăт çитеђђенех тӳлесе таттарасшăн хытăн ĕçлес пулаť.

## Промышлĕннăç.

Хаљ промышлĕннăç ыйтăвĕ çине куçăпăр. Пленăмăн кун йĕркинђе Ђăваш респуплĕкĕн хуçайствин контрољ ђыхвăрĕсем çинђен уйрăм токлат тăнă пирки, епĕ кунта пирĕн промышлĕннăçăн ӳсĕмĕсем çинђен çеç калăп. Çак йулашки çул хушши ĕçленĕ хыççăн промышлĕннăçра пирĕн 10 претприйаттирен 17 претприйаттине çитиђен ӳсрĕ. Вĕсенђен 4-шне тара панă. Претприйаттисем ӳсни 70% пулаť. Промышлĕннăç тăвакан йапаласен шуђĕ 34% ӳснĕ. Пирĕн промышлĕннăç претприйаттийĕсен тĕп кăпиталне çĕнетсе лайăхлатас ĕçре те çитĕнӳсем пур. Пирĕн иртнĕ çулта претприйаттисенђи машшин хатĕрсем 90% таран кивелсе çитнине кураттăмăрђђĕ. Кăçал вăтамран шутласан, кивелнĕ машшин хатĕрсем

$50\%$ йахăна çеç шутланаť. Претприйаттисене çĕнетес ĕçе кăçалхи çул 460.000 тенкĕ укçа йанă. Ку пĕлтĕрхипе танлаштарсан 90% таран ўснине кăтартаť. Çак сахал ђыхвăрсемех пирĕн промышлĕннăç майĕпен пулин те, ўснине кăтартаççĕ. Промышлĕннăçа тата хăвăртрах ўстерсе пырас ыйту укçа тенкĕ пурринђен килет. Пирĕн укçа-тенкĕ сахал пирки промышлĕннăçа питĕ хăвăрттăн ўстерсе йама пултараймастпăр.

Промышлĕннăç ўссе пынипе танаҳ, ĕç укçи те ўссе пынине куратпăр. Ĕçлекенсене паракан ĕç укçи 8,5% ўснĕ. Кунсăр пуçне тата ĕçлекенсене кирлĕ апат-çимĕçпе ытти таварсен хакĕсем те (пўтшет напорĕ) $6,9\%$ ђакнă.

Ĕçлекенсен шуђĕ кăшт ўснĕ: пĕлтĕр хапрăк-савăтсенђе ĕçлекенсем 748 çын пулнă, кăçал 1466 çынна çитнĕ. Ку ђыхвăр пĕђĕккĕ, анђах ку—пирĕн вăйсăр промышлĕннăçăн хисепĕ.

Çитĕнўсемпе танах çитменлĕхсем те пур. Укçа-тенкĕ çителĕклĕ мар пирки, ĕçлекенсене, пуринђен ытла — вăрман промышлĕннăçĕнђе ĕçлекенсене ĕç укçи вăхăтра параймасăр тытăнса тăнă. Кунта та тĕрлĕ майсем тупнă хыççăн ĕç лайăхланђĕ. Тата пирĕн ĕç токăвăрĕсене пурнăçа кĕртсе пыман тĕлĕшпе (Вăрман тресĕ йенђен) тĕрлĕ çитменлĕхсем пур. Вĕсем те пĕтсех пыраççĕ м. т. ку йенђен хытăрах ĕçсемех тунă.

Ĕç тистсиплинĕпе ĕçе тухмасăр вăхăта иртерсе çўрекенсем йенђен пирĕн ĕçсем аванах пымаççĕ. Ку тĕлĕшпе, ку ĕçре йертсе пыракансен, совет, партти, профсойус йенђен ђылайах вăйлă ĕçлеме тивет.

Çитменлĕхсенђен тепĕр çитменлĕхĕ вăл—ĕç укçи ĕç ўсĕмĕпе тан ўссе пыманни. Ĕç ўсĕмĕ ĕç укçинђен кайа йулса пыраť. Ĕç укçи $8,3\%$ ўснĕ, ĕç ўсĕмĕ—2,4%. Çакăнтан ĕнтĕ ĕç ўсĕмне вăйлатас тĕлĕшпе вирлĕрех ĕçлеме кирли, паллах курăнса тăраť.

Пирĕн хапрăк-савăтсенђе тăвакан йапаласене йўнĕ хакпа туса кăларас ĕç те туртăнкă тăраť. Авкустăн 5-мĕшĕ тĕлне йури сăнаса пăхнă хыççăн, хапрăк-савăтсем туса кăларакан таварсен хăй хакне тăракан хака йўнетни палăрманни курăнђĕ. Хăш çĕрте вăл пушшех ўссе кайни те пулнă.

Ытлашши тăкаксене $15\%$ таран ђакарма хушнине те пур претприйаттисенђе те пурнăçа кĕртсе çитермен. Йетĕрнери çу савăђĕ ђакарнă, „Йетинствăпа“ Ђăваш-вăрман тресĕ

ђакарман. Çитменлĕхе çитес кĕске вăхăтрах пĕтерме хушнă.

Малашне Партти Тĕп Комиттеђĕпе Тĕп Контролђ Комиççийĕн пленăмĕ кăтартнисем тăрăх—промышлĕннăç тĕлĕшпе пирĕн ума çак пысăк сатађсĕм тухса тăраççĕ: промышлĕннăçа сарса вăйлатса пыма тунă прокраммăна хăвăртлатарах, кĕскерех вăхăтра пурнăçа кĕртесси; претприйаттисенђе ĕçе тухăçлăрах, канăçлăрах туса пымалли мелсене тупса тăрса, ĕç ӳсĕмне ӳстересси, таварсене ытларах туса кăларасси; ытлашши тăкаксене тата 20% ђакарасси—хапрăк-савăтсене, çуртйĕр таврашне 15% таран йӳнетесси; тавар хакне хапрăк савăтрах тата 5% йӳнетесси; ĕç ӳсĕмне тата 14—16% хăпартасси, кунпа виçеллĕ кайарах йулса пыракан ушкăнсенђе ĕç укçине ӳстересси. Пур вăйпа тăрăшса, хапрăк-савăтсенђен ытларах тавар ĕçлесе кăлармалла тумалла, пирĕн претприйаттисенђе ĕç тистсиплинине татăклах хăпартма тăрăшмалла. Ĕçрен пăрăнса вăхăта сайа йаракансемпе кĕрешмелле, тек малашне ун пеккисем пулмалла мар. Ђĕр таварпа хутмалли хатĕрлессине, тата ытти ĕçсене те пĕлсе, тирпейлĕ туса тăрса, сахал тăкак кăларса пымалла тăвас пулаť. Промышлĕннăç йенђен çакăн пек сатађсем тухса тăраççĕ ĕнтĕ.

## Суту-илӳпе пасар.

Суту-илӳ çине епĕр пур ĕçрен те пысăк хак парса пăхатпăр. Мĕншĕн тесен пасарта икĕ вăй тавлашаççĕ: пĕр йенђен сотсиалисăм вăйĕ, тепĕр йенђе капиталисăмлă вăй. Вĕсем ĕçлекенсемпе хресђенсене хăй аллине çавăрса илесшĕн тăрăшаççĕ. Çавăнпа та суту-илӳ ыйтăвĕ кирек хăçан та ђи малта тăмалла. Кунта епĕр мĕн куратпăр? Ăна кăтартса тăракансем акă мĕн çинђен каласа параççĕ: патшалăхпа копператтивсен суту-илӳ çавăрнăшĕ çултан çул çитĕнсе пыраť. Патшалăх суту-илӳвĕ 16,1% йышăнса тăраť, копператтивсен —53,3%. Ахалђ усламçăсен кăпиталĕ—18,6% çеç йăшăнаť. Пĕлтĕр усламçăсен хăвађĕ пысăкрах пулнă—39,1% йăшăнса тăнă. Çаксем тӳрри-паллипех епĕр пысăк утăмсемпе утни çинђен каласа параççĕ. Ку тĕлте каллех оппоçитси йăнăшни курăнаť. Вĕсем вăл тĕлĕшпе епĕр пуршуаçи çулĕ çине тухса ӳкрĕмĕр тесе кăшкăраççĕ.—Рынăка ахалђ усламçăсем çавăрса илђĕç, епĕр халђ йут патшалăхсемпе патшалăх (монополи) алли урлă анђах суту-илӳ тăвассине пăрахма та хатĕр пул-

малла, теççӗ вӗсем. Епӗр пӗҫӗк респуплӗкре пурӑнатпӑр пулин те, копперауттивсемпе патшалӑх суту-илӳ опороҫӗ ӳссе пынине аван асӑрхатпӑр.

## Копперауттивсем мӗнле ӗçлеççӗ.

Ку тӗлӗшпе каллех çитӗнӳсем пур. Ҫӑвашсойус хӑй илнӗ таварсен хакӗ çумне 11,1% çеç хушса сутаҭ, пӗлтӗрхинҫен 5,82% кайа. Пӗлтӗр тӗрлӗ тӑкаксем 7,25% пулнӑ пулсан, кӑçал вӑл 3,49% çеç. Мускавран панӑ кӑтартусем тӑрӑх ытлашши тӑкаксене 15% ҫакармалла пулнӑ пулсан, пирӗн копперауттивсем—45,32% ҫакарнӑ. Çав йенҫен пӑхсан пирӗн кирлӗ мар тӑкаксем ҫакса пынине сисетпӗр. Лавккӑсен шуҫӗ те нумайланаҭ, кӑçал—230 çитнӗ, пӗлтӗр—200 пулнӑ. Вӑл 9% ӳсни пулаҭ.

Ҫленсен шуҫӗ пӗлтӗрхинҫен 40% хутшӑннӑ. Йалсенҫи копперауттивсенҫе пӗтӗм килӗрен 13,7% ҫленра тӑраççӗ, хуласенҫе—50,4%. Пай укçи çитӗнет, пӗлтӗртенпе 59% пысӑкланнӑ. Вӑтам шутпа йалсенҫи копперауттивсене илсен кашни çын пуçне 2 т. 96 пус пай укçи тивет, хуласенҫе—4 т. 87 пус. Пур йенҫен те ӑнӑçлӑ ӗçсем пулни курӑнаҭ.

Тавар хакне йӳнетес тӗлӗшпе йалсенҫи копперауттивсенҫе 11% йӳнетнӗ, хуласенҫе—10%. Партти кӑтартнине пӗтӗмпех вырӑна кӗртнӗ тесе шутлатпӑр. Çак 9 уйӑх хушшинҫе йалтисен—опороҫӗ 67% таран ӳçрӗ, пӗтӗмпе илсен 59% ӳснӗ

Анҫах ку таран ӗçленипе ҫарӑнса тӑрас çук, ӗç лайӑх. пулса пынӑçемӗн тӑрӑшса ӗçлесе пымалла.

Парттийтсӑсем копперауттивра сахалтарах тӑраççӗ. Пур комуниссене илсен 50% çеç копперауттивра тӑраççӗ, комсомолӗссем татах сахал тӑраççӗ, 12 пинрен 798-ӗш йалти копперауттивсенҫе, 277-ӗш хуларисенҫе тӑраççӗ. Кунпа килӗштерместпӗр: кашниннех копперауттив ҫленӗнҫе тӑмалла, пӗрин те кӗмесӗр йулас çук.

Растратҫӗксем çаплах йулаççӗха, кӑçал каллех 53 копперауттивра 22.506 тенкӗлӗх растраттӑ пулнӑ. Ку ҫи хӑрушӑ, тискер ӗçе хаҫ те хӑваласа йаримарӑмӑр. Çав шутран тара тытса ӗçлеттернӗ приккашҫӗксем çине 57% тивет, правлени ҫленӗсем прикашҫекре ӗçленисем çине 22,5% лекет, т. ы. правлени ҫленӗсем çине 9%. Çак ирсӗрлӗхсемпе пирӗн татах нумай кӗрешмелле пулаҭ.

## Тырпул хатӗрлессипе тавар кӳресси.

Тырпул хатӗрлес ӗҫпе тавар кӳресси ҫинҙен нумайах каласшӑн мар. Тырпул хатӗрлессине планра кӑтартнинҙен 46% ҫеҫ туса ҫитернӗ, ҫу ҫапмалли вӑрлӑхсене 22% хатӗрленӗ. Кӑҫалхи пек ӗҫлени пӗтӗм Сойусра та ҫавнашкал пулсан, пӗтес пулаҭ. Ун пек ӗҫленипе никам та килӗштерме пултараймасҭ. Пӗтӗм Сойус ҫӗршыв талккишпе йӑтӑнса выртаҭ пулин те, кирлӗ таран хатӗрлесе ҫитереҫҫӗ. Епӗр хамӑр респуплӗкре пӗтӗм кӗтессене пӗлсе тӑратпӑр пулсан та, хамӑр шухӑшласа хунӑ планран 46% ҫеҫ пурнӑҫа кӗртнӗ. Вӑл тӗрлӗ сӑлтавсенҙен килҙӗ: рынӑкра мӗн ҙул мӗн пулмаллине пӗлменни, уҙҙот ӗҫӗ йапӑх пыни, ҫак ӗҫе аппаратсем туса ҫитерме хатӗр пулманни т. ыт. Усламҫӑсем хастарлӑрах ӗҫленӗ пирки 46% ҫырлахмалла пулҙӗ. Ҫаксене аса илсен, малашне ун пек киревсӗрсене тӑвас ҫук.

Хуласене ҫимелли йапаласене ҫителӗклӗ кӳрес ӗҫ те уксаклаҭ.

Вӑл тӗлӗшпе тӗрлӗ йӑвӑрлӑхсем пулса иртрӗҫ. Ку ӗҫ пирки Опкомӑн та, райкомӑн та ӗҫлемелле килҙӗ. Йулашки вӑхӑтра ӗҫ кӑшт виҫене кӗрсе пынӑ пек. Ҫапах та ҙенттӑр кӑтартса панӑ тӑрӑх халӑха ваҙҙи ыраш ҫӑнӑхне нумайрах кӳрес пирки тӑрӑшни кирлӗ. Ыраш ҫӑнӑхӗнҙен лайӑхрах пӗҫерсе нумайрах сутма сӗнес пулаҭ. Ыраш ҫӑнӑхне халӑх ваҙҙи кирлӗ таран тӑратма пултармалли майсем сахал мар. Армансене нумайлатса лайӑхрах ҫӑнӑх тума пулаҭ. Авӑртассине те хамӑр респуплӗкрех лайӑхрах авӑртмалла тумалла.

Ҫаксем ҫине пурин те лайӑхрах пӑхас пулаҭ.

## Вырӑнти пӳтшет.

Вырӑнти пӳтшетӑн тупӑш пайӗ кӑҫалхи ҫул 12,7% ӳсмелле. Финанс Комиссариаҙӗ кӑтартнӑ тӑрӑх вырӑнти пӳтшетра патшалӑх пулӑшӑвӗ 75%-на ҫитет. Вырӑнти пӳтшетра хамӑр укҫа тенкӗ мӗн пурӗ те 25% ҫеҫ. Ҫапла ӗнтӗ вырӑнти пӳтшетӑн 3 пайне тӗпри правиттӗлствӑ параҭ. Паллах, ку укҫасем пурте тӗпрен килмеҫҫӗ, вӗсем вырӑнти тупӑшран та килеҫҫӗ. Анҙах вӑл укҫасене, пирӗн хуҫайствӑ лайӑх тӑрас пулнӑ пулсан, ҙенттӑра памалла пулаҭҙӗ, халӗ вӗсем хамӑр патрах йулаҫҫӗ.

Вырӑнти пӳтшета тупӑш ҫаксенҙен килет:

**Тупăш.**

| ТУПĂШСЕМ | 1926—27-мĕш çул | % | 1927—28-мĕш çул | % | Хутшăннă |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. Вырăнти тупăшсем . . . . . . | 1.254.361 | 20,1 | 1.462.550 | 20,7 | 16,6 |
| Вĕсенђен: налок тупăшĕсем . . . | 684.444 | 11,0 | 851.750 | 12,1 | 24,4 |
| Вĕсенђен: налок мар тупăшсем . | 569.917 | 9,1 | 510.800 | 8,6 | 7,2 |
| 2. Патшалăх пулăшни . . . . . . . | 4.382.926 | 70,5 | 4.902.197 | 69,7 | 11,8 |
| 3. Ытти тупăшсем . | 607.338 | 9,7 | 672.600 | 9,6 | 10,7 |
| Пĕтĕмпе . | 6.244.625 | 100 | 7.037.547 | 100 | 12,7 |

Ку укçасене мĕнле ĕçе йарса пыратпăрха? Вырăнти пӳтшета пухăннă укçасем çакăн пек кирлĕ çĕре кайаççĕ:

| ТĂКАКСЕМ | 1926—27-мĕш çул | % | 1927—28-мĕш çул | % | Хутшăннă |
|---|---|---|---|---|---|
| Атминистратсипе сут расхуђĕсем . . | 1.492.342 | 23,7 | 1.335.080 | 18,9 | 10,6 |
| Кулђттурăпа пулăшу . . . . . . . . | 3.388.308 | 53,7 | 3.960.100 | 55,9 | 16,9 |
| Хуçайствăпа происвотствă . . . . . | 1.241.505 | 19,7 | 1.575.100 | 22,4 | 27,7 |
| Ытти расхутсем . . | 188.658 | 2,9 | 201.300 | 2,8 | 6,8 |
| Пĕтĕмпе . | 6.310 658 | 100 | 7.081.580 | 100 | 12,1 |

1927—28-мĕш çулхи пӳтшетра тăкак пайĕ (расхут) 12,1% ӳсет. Пӳтшетри тăках ђи малтан кулђттурăпа пулăшу ĕçне кайма ӳсет. Çав хушăрах атминистратси тăкакĕсем ђакса пыраççĕ (10,6%).

Пĕлтĕрхипе таплаштарсан, 1927—28-мĕш çулта кулђттурăпа пулăшу ĕçне кайакан расхут 52,7%-ран 55,9%-на ӳсет,

хуҫайствăпа происвотствă расхуђĕ 19,7%-ран 22,4%-на ӳсет. Ҫав хушăрах атминистратсипе сут расхуђĕ 23,7%-ран 18,9%-на йулиђђен ђакаť.

Иртнĕ 9 уйăх хушшинђе 1926—27-мĕш ҫулхи пӳтшетăн тупăшĕ 69,4% пухăннă, унтан 63,5% расхут тунă. Пӳтшетăн тупăш пайĕ вăрман паракан тупăшран пухăнса ҫитеймен. Ҫакă пухăнса ҫитеймен тупăш расхут тăвас ĕҫе те ђарса тăнă.

Ҫак ҫӳлте кăтартнисем—Ђăваш респуплĕкĕн патшалăх пӳтшеђĕ те, вырăнти пӳтшеђĕ те ҫулран ҫулах тĕреклене пынине кăтартаҫҫĕ.

Ҫапла ĕнтĕ пӳтшет ыйтăвĕсем тăрăх партти кăтартăвĕсене пăркаланмасăрах пурнăҫа кĕртсе пынă.

## Тирпейлĕх решимĕ.

Атминистратси расхуђĕсене партти мĕн вăй ҫитнĕ таран ђакарма кăтартса панисене 1927—28-мĕш ҫулти пӳтшета тунă ђухне ҫителĕклĕ таранах пурнăҫа кĕртнĕ. Ђăваш респуплĕкĕн тĕпри аппарађĕсене 30% ђакарнă. Ку тĕлĕшпе ҫулталăк хушшинђе 120 пин тенкĕлĕх тирпейленет. Ђăваш респуплĕкне район туса иртернĕ хыҫҫăн, уйесри аппаратсене пĕтернипех тирпейлĕх 140.000 тенке ҫитет. Ҫапла ĕнтĕ. аппарата ҫăмăллатнипех патшалăх пӳтшетĕнђен 260.000 тенкĕ тирпейленсе йулаť. Ку укҫа—атминистратсипе сут расхутне патшалăх пӳтшетĕнђен кайакан укҫан 37,4%-ђĕ пулса тăраť.

Респуплĕке районлани—вырăнти пӳтшет тăрăх ҫакăн ђул тирпейлĕх параť. Район тăвиђђен уĕҫтăвкомсенђе 407 ҫын ĕҫленĕ, вĕсене 251.300 тенкĕ шалу тӳленĕ. Вулĕҫтăвкомсенђе 682 ҫын ĕҫленĕ, вĕсене 290.500 тенкĕ шалу панă. Халĕ район тунă хыҫҫăн, районсенђе пурĕ те 450 ҫын ҫеҫ ĕҫлет. Вĕсене ҫулталăкне 340.487 тенкĕ шалу памалла. Ҫапла ĕнтĕ аппаратран 638 ҫын катăлаť. Ҫапла пулнипе слушăшђисене ĕҫ укҫи парассинђенех 201.513 тенкĕ тирпейленсе йулаť. Аппарата лайăхлатнипе хуҫайствă расхуђĕсенђен 50.000 тенкĕ тирпейленсе йулаť. Вырăнти пӳтшет тăрăх мĕн пурĕ 250.000 тенкĕлĕх тирпейлĕх пулаť. 1926—27-мĕш ҫулхи патшалăх пӳтшеђĕпе вырăнти пӳтшет тăрăх мĕн пурĕ 510.000 тенкĕлĕх тирпейленет. Ку укҫа виҫи атминистратсипе сут ĕҫне кайакан расхутăн 22%-ђĕ пулаť.

Çакăнта кăтартнă тирпейленĕ укçаран 150.000 тенке йахăн район тунă ђухне тухнă тăкансене витме йамалла пулаť. Ытти 360.000 тенки куљттурăпа пулăшу ĕçне, тата йалхуçайстви ĕçне кайаť.

Епĕр тирпейлĕх решимĕшĕн кĕрешес ĕç çине хытă асăрхаса пăхрăмăр. Анђах çапах та кунта нумай çитменлĕхсем пур. Куçа курăнмалла ĕçем ку тĕлĕшпе сахал тунă. Ĕçлекенсемпе хресђенсене ку ĕçе çителĕклĕ таран хутшăнтарайман. Малашнехи ĕçре ку çитменлĕхсене пĕтермелле. Ку тĕлĕшпе партти кăтартса пынисене пĕр пăркаланса тăмасăр пурнăçа кĕртмелле.

## Сайомсем çинђен.

Хамăр çĕр-шыва интустрилес ĕçре тирпейлĕх решимĕсĕр пуçне тата халăхăн ахаљ выртакан укçине патшалăх хăй аллине тĕрлĕ майсемпе илни те питĕ пысăк вырăн йăшăнса тăраť. Мĕншĕн тесен йут патшалăхсенђи пуршуйсем пире кивçенле укçа парса пулăшасшăн мар. Çавăнпа та ĕçлекенсемпе хресђенсене ытлашши пек укçине хăйсен кăсйисенђе ахаљ выртарас вырăнне перекет кассине хумашкăн ăнлантарса пымалла. Çав вăхăтрах, патшалăх кăларнă тĕрлĕ сайомсене илмеллине ăнлантарса парас пулаť. Йулашки вăхăтра вăл тĕлĕшпе темиçе кампани те туса иртертĕмĕр. („Перекет икернелĕхпе“ интустри сайăмне халăх хушшинђе сарни т. ыт.) Кăçалхи çул епĕр хамăр респуплĕкре тĕрлĕ сайомсене 111.454 тенкĕлĕх сутнă. Хаљ интустри сайомне халăх хушшине сарас тĕлĕшпе мĕн пур вăйа хурса ĕçлетпĕр. Çак кампанине тухăçлăн иртерес тесе, Опком вăхăтрах кăтартусем пађĕ. Анђах пирĕн респуплĕк халăхĕ вăйсăртараххи те ытла палăрмаллăх, куçа курăнмаллăхах нумай сарма ђарса тăраť. Çапах та çак сайома нумайрах салатас йĕркепе респуплĕкри тĕп оркăнсемпе ђăваш ĕçхалăхĕ хаваслансах тытăнни, ĕç ăнăçлă пуласса шантараť. Ку тĕлте ĕнтĕ ĕçе татах вăйлатасси паллах. Пленăмăн та ку ыйту çинђе нумайрах ђарăнса тăрас пулаť. Мĕншĕн тесен халăхри ытлашши укçатенке ху çайства хăпартма йарасси парттин кашни кунхи питĕ пысăк ĕçĕ пулса тăраť.

Пур çитĕнўçем те, вĕсем кирек мĕнле пулсан та, пирĕн хуçайствă ĕçĕ тĕрекленсе пыни çинђен каласа параççĕ. Кунпа

пĕрлех, ĕçлекенсемпе хресҌенсен хастарлăхĕпе пулакан ĕçсене тĕплĕн пĕлсе пырасси те çитĕнсе пырат̆. Ĕçлекенсемпе хресҌенсем строиттĕлства ыйтувĕсем çине ăшă кăмăлпа пăхни те партти тĕрĕс çулпа йертсе пыни çинҌен каласçĕ

**Профсойус ĕçĕсем çинҌен.**

Иртнĕ конферентсире те, хаљ те,—хуçайства тĕрекленсе пынă майпе, профсойус орканисатсийĕ ӳссе пынине куратпăр. 1927-мĕш çулти октăпĕрĕн 1-мĕшĕнҌи шута пĕлтĕрхипе танаштарса пăхсан, профсойус Ҍленĕсен шуҌĕ 5,9% хутшăннă. Хаљ профсойуссенҌе мĕн пурĕ—25.097 çын шутланат̆. Ҍăваш пролеттариаҌĕ те хутшăнса пырат̆, вĕсен шуҌĕ хаљ 42,7% йышăнса тăрат̆. Ку сахалтарах таха, çапах та пĕлтĕрхинҌен 5,3% ӳснĕ.

Профсойусра тăракансенҌен парттире тăракансем те йышланасçĕ: апрелĕн 1-мĕшĕнҌе 7,6% пулнă пулсан, хаљ 9,3% çитрĕ. Комсомолĕссен шуҌĕ те нумайланат̆, 8,7% пулнă вырăнне хаљ 10,9% çитнине куратпăр.

Профсойуссен ĕçĕсене аванлатас тĕлĕшпе мĕн тумалла-ха пирĕн? Вăл тĕлĕшпе Ҍи малтан ĕçлемелли майсене çĕнетсе пымалла. Кунта çĕнĕ сатаҌсем шутласа кăларса ларас çук. Комуниссен парттийĕн XIV-мĕш сиесĕ каласа хăварнисене лайăхрах тăна кĕрсе ĕçлесе пымалла. Ĕçлекенсен тĕрлĕ пуху сем урлă массăпа çыхăну тытассине вăйлатмалла. Профсойуссен ĕçĕнҌе хастарлăн ĕçлесе тăракансен уйрăм пуххисене тукаламалла, профсойус акттивĕсен канашлăвĕсенҌе куљтçут ĕçĕсем пирки, ĕç сыхлавĕпе уҌрештенисен ĕçĕсене мĕнле лайăхлатасси çинҌен сӳтсе йавмалла. Партти тума хушнă ыйтусене активпа сӳтсе-йавса, пĕтĕм массă патне илсе çитермелле.

ПрофсойуссенҌе куљçут ĕçĕ аванах пымаст̆. Опком вăл ĕçе хытă йĕрлесе пăхрĕ, уйрăм çитменлĕхсене палăртса пĕтерме хушрĕ. Профсойус Ҍленĕсем нумайĕшĕ йалсемпе çыхăнса тăрасçĕ пулсан, вĕсем урлă йала çĕнĕ йĕрсем çине кăларма тăрăшмалла. Ку малашнехи Ҍи кирлĕ ĕç пулса тăрат̆.

УҌрештенисен ĕçне мĕнле лайăхлатассине тĕллесех кăтартмалла. Вăл тĕлĕшпе тĕллесе кăтартнисене мĕнле пурăнăçа кĕртни çинҌен ыйтса пĕлес пулсан пирĕн çветенисем çук. Мĕншĕн тесен епĕр вăл йĕркепе ĕçлетпĕр пулсан та

ҫапах та каланисене йапӑх туса пыратпӑр. Ҫаксем пурте парттин йертсе пырассине татах вӑйлатмалли ҫинђен каласа параҫҫӗ.

Фраксисем йапӑх ӗҫлеҫҫӗ, вӗсен ӗҫӗ курӑнмасť. Кун ҫинђен ним шарламасӑр иртсе кайас ҫук. Профсойуссем туса иртернӗ сиессенђи фраксисен ӗҫӗсем те йапӑх irtkeлеҫҫӗ; кунта пысӑк ҫитменлӗхсемех пулкаланӑ. Партти йенђен йерте ҫул кӑтартса пырас ӗҫе ытларах вӑйлатма кирлӗ.

## Тӗрлӗ орканисатсисен ӗҫӗсене вӑйлатасси.

Хаљ районсем йӗрки ҫине куҫнӑ майӗпе пур орканисатсисене те район йӗркипе ӗҫлеме куҫарас пулаť. Ҫакӑн пек улшӑну тунӑ хыҫҫӑн ҫав орканисатсисен ӗҫӗсене ђӑнахах кирлӗ таран ђӗртсе йарасђӗ. Ку тӗлӗшпе ҫак сӑмахсенђен ытлашши нимех те калимӑн. Мӗн каланисене пурӑнӑҫа ҫеҫ кӗртсе пырас пулаť. Ку ыйтусем тӑрӑх район йӗрки ҫине куҫмалла пулсанах кӑтартусем патӑмӑр.

## Халӑха вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентесси.

Вӑрҫӑ ыйтувӗ ҫине йулашки вӑхӑтра питӗ хытӑ пӑхнӑ. Партти комиттеђӗсемпе ҫар оркӑнӗсенђе ӗҫлекенсем пур ыйтусене те килӗшӳллӗ туса пынӑ, каласса татӑлайманни ҫук. Вӑрҫӑ оркӑнӗсене йертсе пыракансем пурте партти комиттеђӗн ђленӗсенђе тӑраҫҫӗ, Совет ӗҫне тунӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ.

Халӑха вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентесси пит пысӑккӑн тӑраť. Йут патшалӑхсемпе пирӗн хушӑри ӗҫсем йапӑхса пынӑ пирки Осоавиахим йађейккисем урлӑ халӑха вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентес тетпӗр. „Сыхлӑх ернине“ иртернӗ хыҫҫӑн акӑ мӗн куртӑмӑр: „Хӗрлӗ Ђӑваш“ йероплана тума ку таранђђен 24.000 тенкӗ укҫа пухрӑмӑр. Ку укҫа ҫапах та „Хӗрлӗ Ђӑваша“ туса ҫитерме ҫитеймест, ҫавӑн пирки каллех нумайрах ӗҫлемелле пулаť. Ҫӗнӗрен 21 йађейккӑ уҫрӑмӑр, ђленсен шуђӗ 2 пин ытла хутшӑнђӗ. 3 отрет турӑмӑр, 15 крушок уҫрӑмӑр. Пӗтӗмпе хаљ Осоавахимра тӑраканнисем 5000 ҫын шутланаҫҫӗ, тӗрлӗ крушоксемпе йађейккӑсем 200 йахӑн. Ку ӗҫ ҫапах та ҫителӗклӗ мар. Вӑл ӗҫе ҫийӗнђех пуҫарса йаманни пӑҫларӗ. Йулашки вӑхӑтра ӗҫсем ҫапах та лайӑхлана пуҫларӗҫ. Тӗрлӗ хатӗр-хӗтӗрсемпе укҫа тенкӗ сахал пани ӗҫе нумай кансӗрлет. Осоавиахим йађейккисенђе ӗҫлеме Совет оркӑнӗсем урлӑ кирлӗ таран пулӑшу пама хушнӑ.

## Присӑв.

Хӗрлӗ Ҫара илес ӗҫ кӑҫалхи ҫул та аван иртсе пырат̆. Присӑва хатӗрленес ӗҫе пур йенђен те лайӑх туса ҫитерне. Ӗлӗкхи пек салтака кайас йӗркепе, ӳсӗрӗлсе ҫӳрени, присӑв вӑхӑтӗнђе, сӑра-ерехе сутма ђарман пулсан та, ӗҫсе ӳсӗрӗлнисем сайра хутран ҫеҫ тӗл пулкаланӑ. Тата кӑҫалхи присӑвнӗксем хушшинђе хута пӗлмен ҫамрӑксем те пӑђ-пађ ҫеҫ курӑнкалаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулхи присӑвра хута пӗлмен ҫамрӑксем 7% пулнӑ (ђӑнах та, унђђен сахалтарах пулнӑђђӗ), кӑҫал 1%. Ҫамрӑксем Хӗрлӗ Ҫара хаваслансах кайаҫҫӗ.

Комсмол ҫинђен епӗ кунта каласа тӑмастӑп. Ку ыйтӑва иртнӗ пленӑмра ҫеҫ лартнӑ. Унта тӗрлӗ кӑтартусем йышӑннӑ. Вӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырас пулат̆.

## Уђрештенисене ђӑвашлатасси.

Ку тӗлӗшпе пирӗн тӗрлӗрен ҫитменлӗхсем пур. Епӗр ку ыйтӑва ийуђ уйӑхӗнђе те пӑхса тухрӑмӑр. Ун ђухне ҫитес ҫулӑн йанварӗн 1-мӗшӗђђен аппарата 75% таран ђӑвашлатас, тесе решшени йышӑнтӑмӑр. Нумайах пулмаст̆, ку ӗҫе мӗнле туса пынине сӑнаса пӑхрӑмӑр. Сӑнанӑ хыҫҫӑн, аппарата ђӑвашлатас тӗлӗшпе уђрештенисенђе нийепле план та сукки курӑнђӗ. Ђӑваш ђӗлхине вӗрентекен курса уҫман. Хаљхи вӑхӑтра район тӗлӗшӗпе пысӑк ӗҫсем пулса пыраҫҫӗ. Ҫапах та епӗр ку тӗлӗшпе Опком кӑтартӑвӗсене туса пымаллах, тесе шутлатпӑр. Аппаратсене ђӑвашлатса пынӑ май, натси ыйтӑвӗнђе нумай йӗркесӗрлӗхсем пур: вырӑссем йенђен партти ђленӗсем хушшинђе те, килӗшменнисем пур. Сӑмахран: Улатӑр органисатсийӗнђе тӑракан хӑш пӗр ӗҫлекенсем, вӗсене,—ӗҫлеме пултарайманшӑн, тата киревсӗр ӗҫсем туса ҫӳренӗшӗн ӗҫрен кӑларса йанӑ пирки, Пӑрттин Тӗп Комиттетне хут ҫырса панӑ. Вӗсем: ђӑвашсене автономи панӑ хыҫҫӑн, ђӑвашсем вырӑссене хӗсӗрлеме пуҫларӗҫ. Ҫакӑн пирки те вырӑссемпе ђӑвашсем хушшинђе хирӗҫӳсем тухса кайаҫҫӗ. Вырӑссене ӗҫ памаҫҫӗ. Вырӑс коммуниссене вырӑнтан кӑларса парттире тӑман ђӑвашсене ӗҫлеме йараҫҫӗ, тенӗ. Ку ыйтӑва Улатӑр Укомӗн плӗнӑмӗнђе тапратса тӗплӗн пӑсха тухрӑмар. Пленӑм каларӗ: ку парттийтсӑсем калани нихӑш йенђен те тӗрӗс мар, терӗ.

Тата хăш пĕр уйрăм ђăваш-комуниссем йенђен, аппарата ђăвашлатас тенипе ĕçе питĕ майпен туса пыраççĕ, тесе килĕшмесĕр тăракансем те пур. Ку йулташсем ђăвашлатас ĕç çине, умне сумне пĕлмесĕр пăхаççĕ. Ĕçре квалификкатси, ăсталăх кирлине шута илмеççĕ, т. ыт. те. Ку йулташсен шухăшĕпе—аппарата ђăвашлатмалла тăк, ку ĕçе пур йенђен те питĕ хăвăрт туса пĕтермелле пек пирĕн, çак çитес вăхăтсенђех, кирлĕ таран хатĕрленсе çитеймесĕр, ђăвашсене лартма пултармалла мар вырăнсем те пур. Çавăнпа та, аппарата ђăвашлатса, телопроисвотствă ĕçĕсене ђăвашла туса пынисемпе танах, ђăвашсенђен тĕрлĕ ăстаçсене хатĕрлес ĕçе те туса пымалла.

## Хĕрарăмсем хушшинђи ĕç.

Хĕрарăмсем хушшинђи ĕç çинђен каланă майпе епĕтин çеç пулса иртнĕ Советра ĕçлекен хĕрарăмсен сиесĕ мĕн кăтартса хăварнă теп шухăшсем çинђен çеç калатăп. Ку сиес, хĕрарăмсем хушшинђе епĕр ку таранђђен курман вăй пуррине кăтартрĕ. Сиесра 71 хĕрарăм пулнă. Вĕсем пурте Советра ĕçлекенсем. Вĕсем сиесра пурте, арçынсем пекех питĕ ĕçлĕ калаçрĕç. Пирĕн çĕнĕрен ĕçлекен вăй пур, анђах ку ĕç çине епĕр çителĕклĕ таран пăхаймастпăр. Хĕрарăмсене тĕллесе ĕç тупса парса, вĕсене вĕрентсе тăрас йенђен епĕр питĕ сахал ĕç тунă. Сиес ĕçĕсене лайăх асăрхаса пынă çынсем сиесра тухса калаçакан, парттире тăман, çăпаталлă хĕрарăмсем йепле каланине пĕлеççĕ. Вĕсем тĕплĕн калаççĕ: влаç лайăх, епĕр пĕрле ĕçлетпĕр, партти тĕрĕс çулпа йертсе пырать, теççĕ. Пирĕн ĕçри çитменлĕхсене те, вĕсене йепле пĕтермеллисене те кăтартрĕç. Кусемпе пĕрлех тата акă мĕн курăнђĕ: сиесра тухса калакан хĕрарăм комуниссем—сотсиалисăм, комунисăм çинђен ытларах калаçрĕç. Пĕр сăмахпа каласан, пĕр калама вĕреннĕ сăмахсене калаççĕ. Çакăн пек каланисене итлетĕн те, йăвăр пулса килет. Кун пек тухса каланисем вĕсем, пирĕн хăш пĕр партти ђленĕсем, акитпроп ĕçĕнђе еçлесе, хресђенсемпе пĕрле ĕçлеми пулнипе, хресђенсенђен уйăрălма пуçланине кăтартать. Çак йапала ĕнтĕ ку ыйту патне тĕплĕрех пырса пăхмаллине кăтартать. Çавăнпа та епĕр ђас ђасах калатпăр: ыйтусене пурнăç йенђен сӳтсе йавнă ђухне, пиреміттĕнклани кирлĕ мар, тесе. Çакна сиесра палăртмалла пулђĕ

Советра ĕçлекен хĕрарăмсен сиесĕ пирĕн хĕрарăмсем хушшинҍе лайăх актив пуррине кăтартрĕ. Ку активпа усă курма пĕлмелле.

## Акиттатсипе проппакантă ĕçĕ.

Акитатсипе проппакантă ĕçне Парттин XI-мĕш конферентсийĕ кăтартса хăварнисем тăрăх, тата парттин Тĕп Комиттеҍĕ кăтартса тăнисем тăрăх туса пынă. Парттин XI-мĕш конферентсийĕ пирĕн орканисатсире политтĕк тĕлĕшпе пĕлменлĕхне пĕтерме партти сиесĕсемпе конферентсийĕсен, ленăмĕсен, Коминттерн Ĕçтăвкомĕн решшенийĕсене тарăнрах вĕренсе пыма; ирĕклĕ орканисатсисен ĕçĕсене вăйлатма; тĕне хирĕç проппакантă вăйлатма хушса хăварҍĕ. Ку кăтартусене пурне те туса пынă.

Партти тĕлĕшĕнҍен çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçе вăйлатса йанă. Комуниссемпе парттире тăман çынсене вĕрентес тĕлĕшпе нумай ĕç тунă. Кăçалхи çул йалти политшкулсенҍе проппакантиссем те сителĕклĕ. Анҍах кунта çакна каласа хăварас пулаť—проппакантиссем сташ йенҍен çамрăк. Проппакантиссене çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлеме иртнĕ çура уçнă курсран вĕренсе тухнă 20 çынтан 10-ĕш анҍах партти ҍленĕсем, ыттисем кăнтитатсем. Сташ тĕлĕшĕнҍен нумайĕшĕ 1925—26-мĕш çултанпа çеç ĕçлеççĕ.

Партти тĕлĕшĕнҍен çутта кăларас ĕç мĕнли çак ҍыхвăрсенҍен лайăх курăнаť:

| Политкраматтă шкулĕсем | 1926—27-мĕш çулта | | 1927—28-мĕш çулта | |
|---|---|---|---|---|
| | Миçе шкул пулнă | Миçе çын вĕреннĕ | Миçе шкул | Миçе çын вĕренет |
| Нормаҍнăй шкул. | 13 | 184 | 13 | Паллă мар |
| Сокрашҍен. „ | 3 | 142 | 5 | |
| Статсионар. „ | 4 | 202 | 9 | |
| Перетвишкă шк. | 26 | 1869 | 25 | |
| Сиес—курс . | 3 | | | |
| Пурĕ . | 49 | 2487 | 52 | Паллă мар |

1927—28-мĕш çулта, крушоксемсĕр пуçне, тĕрлĕ политшкулсем урлă 934 комунис, 799 комсомолĕс, 577 парттире тăман çын, пурĕ—2310 çын вĕрентсе кăларма шухăшлатпăр. Ку ђыхвăр политшкулсенђе вĕренекенсем иртнĕ çулта нумайтарах пулнине кăтартаť. Ку ак çакăнтан килет: пĕлтĕр кашни проппакантис 3 тапхăр вĕрентсе кăларнă, статсионарнăй шкулсенђе—4 тапхăр. Кăçал ун пек пулмасť. Кашни проппакантисăн 2-шер тапхăр (куçса çӳрекен шкулсенђе $2^1/_2$ уйăх вĕрентмелле пулаť) çеç вĕрентсе кăлармалла тума шутлатпăр. Статсионарнăй шкулсенђе вĕренмелли çул тăрăшпех вĕрентмелле пулаť.

Иртнĕ çулта харпăр хăй теллĕн вĕренмелли крушоксем питĕ хăвăрт йышланса карĕç. Иртнĕ çулта 270 крушок пулнă, 1926—27-мĕш çулта--575 çитнĕ. Пĕр çул хушшинђе харпăр хăй тĕллĕн вĕренмелли крушоксем 113% ӳснĕ. Унђђенхи çул крушок ђленĕсем 7.500 çын пулнă, 1926—27-мĕш çулта—10.700 çын. Крушок ђленĕсем те 42% йышланнă. Вĕсенђен 980 çын политтĕке харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен крушоксенђе ĕçленĕ. Вĕсем хушшинђе партти ђленĕсенпе кăнтитађĕсем 500 çын, комсомолĕсем—360, парттире тăманнисем—120. Вĕсенђен 80 хĕрарăм. Пĕтĕм Ђăваш респупкĕкĕпе политшкулсемпе крушоксенђен политтĕк ĕçне 3480 çын вĕренсе тухнă. Вĕсенђен: комуниссем—36%, комсомолĕссем—43%, тата парттире тăманнисем—21%. Пĕтĕм орканисатсине илес пулсан, пĕлтĕр орканисатсири комунисенђен 40% политтĕк ĕçĕсене вĕренсе тухнă. Пирĕн çак иртнĕ çулталăк хушшинђе тунă çитĕнӳсем: парттипе комсомол массине политтĕке вĕрентес ĕçе нутайтарах хутшăнтарнă, шкулĕсем те лайăхланса çитнĕ; шкулсем план тăрăх ĕçлесе пынă, АПО йенђен те йертсе пырас ĕç лайăхланнă; шкулсене кĕнекесем вăхăтра йарса тăнă.

Ку ĕçре, çитĕнӳсемпе танах, çитменлĕхсем те пур. Вĕсенђен паллăраххисем: вĕрентес ĕçре пĕр пек меттăт çукки, политшкулсенђе вĕренекенсене илме пĕлменни, сађаттисем кайа йулса пуçланаççĕ; вĕрентнĕ ђухне тĕнђере хаљхи вăхăтра пулса пыракан ĕçсемпе парттин ђеретре тăракан сатађĕсемпе паллаштарса çыхăнтарса вĕрентменни.

Политкрамăттă крушокĕсемпе харпăр хăй тĕллĕн вĕренмелли крушоксенђе çитменлĕхсем тата нумайтарах.

Ĕçлекенсем çук, литтераттурă çителĕклĕ мар. Пуринђен ытла опшђеопрасоваттĕлнăй крушоксем литтераттурăсăр аптраççĕ.

Парттин XIV сиесĕпе XV конферентси ĕçĕсене крушоксенђе вĕренес вырăнне пухусенђе токлатсем итленĕ. Вăл тĕлĕшпе кăтартса панисем сахал пулман пулин те, çапла хăтланнисем пулкаларăç. Малашне ун пек пулмалла мар.

1927—28-мĕш çулта вађђи малтанах инструксилле çыру тăрăх мĕнле ĕçлемеллине кăтартса патăмăр. Кĕнекесем те нумай валеçсе паратпăр.

Малашне мĕн тумалла? Политтĕк тĕлĕшпе вĕрентессине хаклă вырăна хурса, пропакантиссене пысăкрах сташлă комуниссенђен хатĕрлемелле. Çавна пурăнăça кĕртес тесен, парттире нумайранпа тăракансене Совпартшкул урлă вĕрентсе кăлармалла.

Пĕлтĕр курсемпе шкулсене уçсан та ĕç йĕркеллĕ пулманни кăçал ан пултăр.

Куђтçут ĕçне хытăрах вăйлатса парттире тăракансене пурне те çав ĕçне çавăрса илмелле.

Малашне партти решенийĕсемпе постановленисене вăхăтра вĕренсе пымалла.

Çапла ĕнтĕ акитатсипе проппакантă ĕçне вăй çитнĕ таран туса пынине куратпăр. Анђах ăна епĕр çителĕклĕ тесе калама пултараймастпăр. Кунта пирĕн нумай çитменлĕхсем пур. Вĕсене пĕтерес пулаť.

## Партти акттивĕпе ĕçлесси.

Парттин акттивлĕ ђленĕсем—каçхи Совпартшкул, акттивиссен курсĕ, Ленинисăма вĕренмелли крушоксем, акиттаттăрсен крушокĕ, тĕнђери ĕçсене вĕренсе пымалли крушоксем урлă, тата ытти майсемпе тĕрлĕ ыйтусемпе паллашса пыђĕç. Ун пек крушоксем пĕлтĕр—60 пулнă. Ĕçсем аван пулса пыманни тĕрлĕ сăлтавсенђен килђĕ. Ытлашши ĕçпе тийенни, крушоксене йертсе пыракансем çукки пĕтĕм ĕçе кансĕрлесе пыђĕ.

Йалта ĕçлеме кирлĕ çынсене Совпартшкул парса тăраť. Унта 1926—27-меш çулта 204 çын вĕреннĕ. I-мĕш сыпăкĕнђен—74 çын, II-мĕшĕнђен—64 çын вĕренсе тухрĕç.

Çулла тĕрлĕ курссемпе канашлăвсем туса иртертĕмĕр. Çак çура проппакантиссемпе йађейккăсен çекреттарĕсем, тата

хěрарăм органисаттăрěсем ваҫҫи уйрăм курс туса вěрентрě-мěр. Кунсăр пуҫне тата тěрлě курссем те тукаларăмăр.

Аҫа ҫурҫěсенҫе ěҫлекенсен канашлăвěпе вăтамрах шкулсенҫе вěрентекен опшҫествоветсен канашлăвне т. ыт. турăмăр. Ҫакăн пек курссемпе канашлăвсем виттěр мěн пурě 490 ҫын кăларнă. Проппакантиссемпе йаҫейккă ҫекреттарěсен курсě урлă уйрăм 71 ҫын вěрентсе кăлартăмăр. Вăл шутран комуниссем 40 ҫын, партти кантиттаҫěсем—23, комсомолěс-сем—7, парттире тăманни—1.

Ытти 419 ҫынна йěрлесе тухсан акă мěн куратпăр: комуниссем—109, партти кантитаҫěсем—22, комсомолěссем 92, парттире тăманнисем—196.

Улатăр уйесěнҫе икě ҫěрте пионерсем хушшинҫе ěҫле-кенсен курсěсене туса иртерне, унта 31 ҫын вěрентсе кă-ларнă. Патěрйел уйесěнҫе виҫě ҫěрте кěтӳҫсен курсне туса, 63 ҫын вěрентнě. Пур ҫěрте те йалхуҫайстви тěлěшпе вăхăт-лăх курссем уҫса вěрентнě. Респуплěкěпе мěн пурě—49 курс тунă пулнă, вěсем урлă 1926 ҫын вěрентсе кăларнă.

## Тěрлě кампанисене туса иртернипе халăх хушшинҫе ěҫлесси.

Вăл ěҫе хуласенҫе тěрлě пухусем урлă туса пыратпăр. Вăл пухусене халăхпа (профсойус ҫленěсемпе т. ыт.) пěрле пухăнса тăватпăр. Хăш пěр ҫух пурне пěрле пухса ҫаплă саҫҫетанисем туса иртерне. Хěрлě кěтессем, ҫěрě хаҫатсем т. ы. урлă та кампани ыйтувěсемпе палаштарма тăрăшнă. Кунсăр пуҫне тата кампанисене иртерне ҫух ҫас ҫасах митěнкăсем, темонстратсисем туса иртеркелснě. Хуласенҫе ҫак майсемпе кампани ыйтувěсене кирлě таран пěлтерсе пыратпăр.

Йалсенҫе ун пек мар, урăх майсемпе ěҫлесе пыраҫҫě, улахсемпе халăх пухусем урлă. Хěрлě улахсем туса иртенине ҫамрăксем ҫеҫ мар, ватăраххисем те хапăл тăваҫҫě.

Йалсенҫе ыйтупа ответсен каҫне те нумай ҫӳреҫҫě, ҫав-сене нумайрах туса иртеркелемелле.

Ҫак иртнě вăхăтра мěн пурě 16 тěрлě кампани иртер-мелле пулнă. Кун пек кампанисěр пуҫне тата ҫаксем пирки те уйрăм кампанисем иртермелле пулҫě:

1. Вăрҫă хăрушăллăхпе Совет Сойусěн шалтипе тулти лару-тăрувě ҫинҫен ăнлантарас йатпа.

2. Совет суйлавне хатӗрленес камппани.

3. Тавар хакне йӳнетессине, происвотствӑна лайӑхлатасси, тирпейлӗх решимӗ çинђен ӑнлантарса парас шутпа.

4. Октӑпӗр уйавӗ 10 çул тултарнӑ йӗркепе.

5. „Сыхлӑх ерни“.

6) „Хӗрлӗ Ђӑваш“ ваљђи укçа-тӗнкӗ пухас шутпа.

Акиттатсиллӗ кампанисене кӑçал лайӑх туса иртернӗ майӗпе, суйлавсене те çынсем нумайрах пыђӗç, хӗрарӑмсемпе ђухӑнсен акттивнӑçӗ те ӳснӗ т. ыт. те.

Пур политтӗкла ыйтусене те халӑха вӑхӑтра çителӗклӗ ӑнлантарни пуриншӗн те аван. Вулӑссенђен, хула-сенђен катарахра пурӑнакан йалсем вӗсем çинђен пӗлмесӗрех, илтмесӗрех тӑрса йулма пултараççӗ.

Йулашки çитменлӗх—вӑл акитпроп ӗçне кирлӗ таран уђђота илсе пыманни.

## Ӗçйалкорсен хастарлӑхӗ ӳсет.

Пирӗн ђӑваш пиђеђӗн ӗçйалкорӗсем хаљхи вӑхӑталла питӗ пысӑк вӑй пулса тӑраççӗ; вӗсем никама тиркемесӗр пур йӗркесӗрлӗхсемпе кӗрешеççӗ. Парттипе Совет влаçне ирсӗрлӗхсене пӗтерсе пыма пулӑшаççӗ. Çапах та вырӑнсенђе ӗçйалкорсене йертсе пырас ӗç йӗркеленсех çитеймест. Хӑшпӗр çӗрте ӗçйалкорсен йухӑмне тӗрӗс ӑнланса илейменни те пур. Çавӑнпа та ӗçйалкорсен ыйтувӗ пирӗн умра питӗ вирлӗн тӑрать. Иртнӗ пленӑмра ӗçйалкорсене хӗсӗрлекенсем нумайланса пыраççӗ тесе те каласаттӑмӑр. Çаксем пурте çитес пленӑмра ӗçйалкорсемпе çтена хаçађӗсем çинђен уйрӑм ыйту лартма хушаççӗ. Йӑнӑш шухӑшсемпе пӑтранакансем ан пулђӑр тесен, çапла тумаллах килет. Ку ӗнтӗ пулас ӗç. Хаљ вӑл тӗлӗшпе ӗçлемесӗр тӑрас çук. Ӗçйалкорсем пире питӗ хаклӑ хыпарсем парса тӑраççӗ. Вӑл хыпарсем тӑрӑх епӗр халӑх шухӑшсене пӗлсе тӑратпӑр, тата уйрӑм ђирђӗрсене тупатпӑр. Хаçата пур саметкисем кӗмеççӗ пулсан та, епӗр вӗсемпе усӑ курмастпӑр темелле мар. Халӗ ӗçйалкорсем çырни лайӑхланса пырать. Проккураттурӑ кӑтартнӑ тӑрӑх, ӗçйалкорсем çырни пӗлтӗр 31% анђах тӗрӗс пулнӑ, кӑçал ӗçйалкорсем çырни тӗрӗс пулса пыни 62% çитнӗ. Ку пӗђӗк йапала мар. Ку ӗçйалкорсем ӗçе пӗлсе ӗçлени ӳссе пынине кӑтартать, Ӗçйалкорсен хушшинђе политçут ӗçне хӑпартса пырас ӗç çине пӗтӗм

партти шухăшне йарас пулаť. Çав шутах çтена хаçађĕсем çине те ытларах пăхас пулаť. Окťапĕр революутси уйавĕ 10 çул тултарнă çĕре пирĕн çгена хаçађĕсем мĕн-мĕн тунине шута илмелле пултăр.

Çтена хаçађĕсем çумĕнђи йалкорсен крушокĕсен ĕçĕсене йĕркелесе йарса, вĕсем урлă пиђет ĕçне тата нумайрах ĕçхалăхне йавăçтарма майсем тупса тăмалла. Пуринђен ытла ку ĕçе хĕрарăмсене, патрак-ђухансене ытларах йертмелле.

Ĕçйалкорсен шуђĕ те пирĕн ђăваш пиђеђĕн пысăк, вăл çулран çулах ўссе пыраť. „Канаш“ хаçата сырса тăракансемех (шута илнисем) хаљхи вăхăталла пинрен иртеççĕ, „Трудовая газета“-па çырса тăракансем 650 çынна йахăн.

Çаксем ĕнтĕ пĕтĕмпех, ĕçйалкорсем хушшинђи ĕç пирĕн ĕçре пăллă вырăн йышăнса тăнине кăтартаççĕ. Ĕçйалкорсене йертсе пырас ĕçе парттин ытти пысăк ĕçĕсемпе танах, йĕркеллĕ, пĕлсе туса пырас пулаť.

---

## ПАРТТИ ĂШĔНЂИ ĔÇСЕМ.

### Парттири оппоçитсин сийенлĕ ĕçĕсем.

Партти ĕçĕсем çинђен калама пуçлађђен манăн парттин пĕтĕм ларутăрувĕ çинђе ђаранса тăмалла пулаť. Вăхăта нумай ђăсас мар тесе, епĕ Партин Тĕп Комиттеђĕпе Тĕп Контроль Комиççин авкуст уйĕхĕнђе пулса иртнĕ пĕрлешўллĕ пленăмĕнђен пуçласа калатăп.

Йулашки вăхăтсенђе парттири оппоçитси тепĕр хут парттийе хирĕç тухса сийенлĕ ĕçсем тума пуçларĕ. Партти тистсиплинине пĕр ђарăнмасăр пăсса тăнăшăн Парттин Х-мĕш сйесĕ тăтартса хаварнă тăрăх, Çиновйĕвпа Тротски йулташсене Партти Тĕпкомĕпе Комииттернран çеç мар, парттирен те кăларса йамалла пулнă ĕнтĕ. Апла пулин те, Партти Тĕпкомĕпе Тĕп Контроль Комиççийĕ, урăх ниçталла та кайса кĕмелле мар çĕре çитсе тухнă оппоçитси пуçлăхĕсене хăйсен йăнăшĕсене тўрлетме май парас тесе, тарттире килĕшў тăвас тесе—Тротскипе Çиновйĕва тата тепĕр хут Партти Тĕпкомĕнђех хăвармалла туса,—оппоçитси пуçлăхĕсене çаксене тума хушрĕ:

1. Вăрçă хăрушлăхĕсем умĕнђе Тротскин Совет Союсне сыхлас ĕçе хавшатпа вĕрентекен теорине пăрахмалла;

2. Партти полђшевисăм çулĕнђен пăрăнса пырат, текен елеке хирĕç тăмалла;

3. Иккĕмĕш партти тăвас шухăша пĕтермелле,—фраксисене салатса йамалла, парттипе Партти Тĕпкомĕн решенийĕсене пăхăнса, туса пымалла.

Оппоçитси ку условисене йышăнмарĕ. Пленăм Тротскипе Çиновйĕва Парттин Тĕпкомĕнђен кăларса йамалла тесе йышăнсан, оппоçитси пленăм сĕннисене йышăннă пек пулђĕ, анђах унтах (авкустăн 8-мĕшĕнђе панă сайавленире) хайĕн ĕçне малалла та туса пыма çурăксем хăварђĕ. Çапах та, çак сайавленийе панă хыççăн Тротскипе Çиновйĕва парттин Тĕпком ђленĕнђен кăларас ыйтăва пленăм сӳтсе йавмарĕ. Тротскипе Çиновйĕва оппоçитсин йурăхсăр ĕçĕсем çинђен йулашки хут астутарса, кун пек татах хăтлансан Партти Тĕпкомĕнђен кăларса йарасси çинђен асăрхаттарнăђђĕ. Кунпа пĕрлех пленăм тата çакна та палăртса хăварђĕ: оппоçитси кайалла ђакрĕ пулсан та, вăл хăй тунă йăнăшсене пăрахма пулђĕ пулин те, оппоçитсин халђхи сайавлĕнийĕ октăпĕрĕн 16-мĕшĕнђе (1926-мĕш çулта 15-мĕш конферентси умĕн) панă сайавлени пекех, ђĕререн панă сăйавлени мар. Оппоçитси партти сĕннисене пĕтĕмпех ђĕререн йышăнманни вăл—оппоçитси малашне те парттипе кĕрешме çулсем хăварнине кăтартат, тенĕђђĕ.

Тата Партти Тĕпкомĕпе Тĕп Контолђ Комиççи пленăмĕ оппоçитсине хăйсен фраксисене салатса йама хушрĕ. Пур орканисатсисене те тĕрлĕ оппоçитсиллĕ фраксисене, ушкăнсене пĕтерсе пыма ђĕнђĕ. Çаксем пулаççĕ ĕнтĕ Парттин Тĕп Комиттеђĕпе Тĕп Контролђ Комиççин йулашки пленăмĕђе оппоçитси çинђен йышăннă решенисем.

Йулашки вăхăтра пулса пыракан ĕçсем, оппоçитси авкуст уйăхĕнђе панă сайавлени—ултав çеç пулнине кăтартаççĕ.

Оппоçитси парттире тăрса, партти кăтартнă пек ĕçленçи пулса, çав вăхăтрах парттипе хирĕç, иккĕмĕш партти тăвасшăн кĕрешет. Çак сăлтавпах оппоçитси тĕрлĕрен хутсем çапма тытăннă, ку ĕç халђ, çентăпĕрĕн 3-мĕшĕнђе палăрнă. Оппоçитси парттин 15-мĕш сиесĕ умĕн халех тискуççи (тавлашу) пуçласа йарасшăн тăрăшат. Парттин Тĕмкомĕ

15-мěш сиесě вађђи хатěрленě теçиссене пиђетлетђенех тискуççи уçни вырăнлă мар тесе шутлаŤ. Алăра теçиссем пулмасан, мěн çинђен калаçмаллаха? Партти пěрре йышăннă решшенисем тăрăх татах-тискуççи уçма йурамасŤ.

Оппоçитси партти çулěнђен пăрăннăçем пăрăнса пыраŤ: йулашки вăхăтра оппоçитси револђутсийе хирěç пыракан Керманири Маслăв ушкăнěпе сыхăну тытас ěçе вăйлатнине куратпăр; Мускавра, оппоçитсин вăрттăн ěçлекен типокрафине тупнă. Ку типокрафире пуршуаçиллě, Совет влаçне хирěç пыракан контр-револђутсиллě инттеликентсем те ěçленě.

Çапла ěнтě, оппоçитси парттине хирěç кěрешес ěçре контр-револђутсиллě инттеликентсипе пěрле ěçлес çěре çитсе тăђě. Оппоçитси (Преопрашенски, Шаров, Çерепрйакков) Совета хирěç ěçленěшěн арěсленě çынсене арěсрен хăтарма хута кěрет. Оппоçитси калаŤ: вăрттăн ěçлекен типокрафишěн оппоçитси ответ хăй тытаŤ, тет. Çапла ěнтě оппоçитси, Совета хирěç ěçлекен çынсемшěн ответне хăй çине илсе, вěсене хăтарасшăн.

Çакăнтан ěнтě епěр, Парттин Тěпкомěпе Тěп Контролђ Комиççин авкуст уйăхěнђе пулса иртнě пěрлешўллě пленăмě,—оппоçитси хăй фраксиллě ěçленě пирки, оппоçитси парттипе Совет влаçне хирěç ěçлекен çынсене пěрлештерсе тăракан вырăн пулса тăраŤ, тесе палăртса хăварни тěрěс пулнине куратпăр. Халě ěнтě епěр, оппоçитси Совета хирěç ěçлекенсемпе пěрле ěçлеме пуçланине куратпăр. Çиновйěв, Çмилкă, Петтерсон вăрттăн ěçлекен типокрафи тунине хирěç çапла каланă:

Епěр халě полђшевиксен парттийě 1917-мěш çулта, ийулђ уйăхěнђе, Керенски полђшевиксемпе кěрешнě ђухнехи пек вăхăтра пурăнатпăр. Ун ђухне полђшевиксене Керманирен йанă шпионсем тесе елеклеђђěç, тенě. Оппоçитси, кирлě пулсан, çак вăхăта пурăнса иртерме шутлаŤ. Ку йапала, оппоçитси пирěн партти çине меншевиксемпе еççерсен парттийě çине пăхнă пек пăхнине кăтартаŤ; оппоçитси пирěн влаçа контрреволђутсиллě влаç вырăнне хураŤ. Кунтан вара полђшевиксем ийулђ кунěсенђе меншевиксен влаçне хирěç тăнă пек оппоçитсин халђхи влаçа хирěç кěрешесси тухса тăраŤ пек. Çакăн пек тума оппоçитси хатěр. Анђах ун ђухне (ийулђ кунěсенђе) контрреволђутсиллě влаçпа кěрешнě, халě çак

йапаланах вӗсем Совет влаçне хирӗç тума шутлаççӗ. Ку йапала—оппоçитси парттипе кӗрешес ӗçре ним умӗнђе те ђаранса тӑмасӑр кӗрешессине кӑтартат. Оппоçитси--вак пуршуаçи умӗнђе ђакса пыратпӑр; Киттайри револђутси пӗтсе ларђӗ; епӗр йут патшалӑхсемпе сутуилӳ тӑвас ӗçре монопполи пӗтес вӑхӑт умӗнђе тӑратпӑр,—тесе елеклет.

Çапла ӗнтӗ, оппоçитси авкустӑн 8-мӗшӗнђе парттипе кӗрешме пӑрахатпӑр тесе сайавлени пани—парттипе кӗрешес ӗçре „парттин 15-мӗш сйесӗ умӗнхи вӑхӑтпа усӑ курма“ парттийе улталани çеç пулђӗ.

Вӑрттӑн ӗçлекен типокрафине тупсан, Мускав орканисатсин Контролђ Комиççийӗ ку ӗçе пӑхса тухса, ку ӗç ђӑнахах та пулнине кӑтартрӗ. Мускав Контролђ Комиççийӗ 14 çынна ку ӗçшӗн парттирен кӑлармалла турӗ. Парттин Тӗп Контролђ Комиççийӗ ку ӗçе пӑхса тухса, вуникӗшне парттирен кӑларђӗ, иккӗшне парттирех хӑварђӗ.

Çак вӑхӑтрах Тротски мӗн тӑватха? Оппоçитсионерсем вӑрттӑн ӗçлесе, тӗрлӗ майсемпе типокрафисем туса, парттийе хирӗç ӗçленӗ вӑхӑтра, Тротски парттине хирӗç пӗр Совет Сойусӗнђе çеç мар, тата Керманире револђутсине сутакан Маслӑв ушкӑнӗн хаçађӗсемпе усӑ курса ӗçлет. Ӗнерхи „Правтӑра“ каланӑ пек—Совет Сойусӗпе Коминттерна туллама Кинтенпурк*) патшалӑхӗнђи хаçатсемпе усӑ курса, çӗнӗ парттипе тӑваттӑмӗш инттернатсионал тӑвасшӑн ӗçлӗт. Çапла ӗнтӗ, вӑрçӑ хӑрушлӑхӗ умӗнђе, оппоçитси револђутсийе хирӗç пыракан пур çӳпçапсемпе пӗрлешсе ӗçлет.

Коминттерн Ӗçтӑвкомӗ Тротски ӗçӗсем çинђен пӑхса тухса, Тротскипе Вуйовиђа Коминттернран кӑлармаллипех кӑларса йађӗ. Вӗсене иртнӗ пленӑмрах кӑларса йамалла тунӑ пулнӑ, халӗ ӗнтӗ кӑлармаллипех кӑларђӗç, мӗншӗн тесен вӗсем парттипе Коминттерна хирӗç кӗрешес ӗçе пӑрахма пулмарӗç. Коминттерн Ӗçтӑвкомӗн ларӑвне ђӗнсе пынӑ Тротски мӗн каланӑ-ха? Вӑл каланӑ: мана партти тистсиплинӗ питех кирлӗ мар тенӗ.

Малалла вӑл,—партти тистсиплинӗпе партти ӗçӗнђе тӑвакан киревсӗр ӗçсене хупласа, пытарса тӑрат, тенӗ. Халђх

*) Кинтенпурк—Кӗрмађи преçитенђӗ. 1914—18-мӗш çулхи вӑрçӑра Вилкелм патшан кӗнӗралӗ пулнӑ. Вӑрçӑшӑн çунакан çын.

вăхăтра пĕр орканисатси те ыйтăва сӳтсе йавмасť, хăй решшени йышăнмасť, кăтартса панисене çеç туса пырať. Коминттерн п р е ç и т и у м ĕ те çавнашкалах. Пур ыйту çинђе те Сталинпа Пуххарĕн ушкăнне сыхлас ыйту тăрať, тенĕ. Çапла ĕнтĕ, оппоçитси сăмаххи тăрăх, Сталин пурне те пăђăртať.

— Аппарат, — тет Тротски,—сйеса малтанах хăй тĕллесе хунă çынсене пухма хатĕрленет. Вара лешсем, аппарат „тăррине“ малашне те çаплах ĕç туса пыма суйласа хăвараççĕ.

Çаксем пурте, оппоçитси хăй панă сăмаххисене хăйĕнђе тытманнине кăтартаççĕ, оппоçитси çаплах парттийе хирĕç кĕрешнине кăтартať. Çаксем пулаççĕ ĕнтĕ хаљхи вăхăтра оппоçитси çинђен таракан ыйтусем. Çаксенђен епĕр мĕн калама пултаратпăр? Оппоçитси, парттине салатса йарас тесе, тĕрлĕ майсемпе усă курса хăй вăйне пухрĕ. Вăл ку тĕлĕшпе иккĕмĕш партти туса пирĕн ретсене сапаласа йама тăрăшať. Вăл çак шухăшсемпех парттин 15-мĕш сйесне хатĕрленет. Мускав Контрољ Комиççин, Парттин Тĕп Контрољ Комиççин, Партти Тĕп Комиттеђĕпе Коминттерн Ĕçтăвкомĕн преçитиумĕн решшенийĕсене парттин пур орканисатсийĕсем те ы р л а ç ç ĕ, оппоçитсине хытăрах айăплама ыйтаççĕ.

## Ђăваш орканисатсин ĕçĕсем.

Çакăн пек лару тăру хыççăн хамăр орканисатсин ĕçĕсем çине çаврăнса пăхăпăр. Пĕтĕмĕшпе илсе пăхсан, пирĕн орканисатси лайăх тăрať, хăй шухăшсемпе вăл пĕтĕмпех Ленин çулĕ çинђе тăрať. Ку пысăк ыйту çине XI-мĕш конферентси те, Опкомăн III-мĕш пленăмĕ те, районсенђи ийуљ уйăхĕнђе пулса иртнĕ конферентсисем те, Опком пӳровĕ Контрољ Комиççипе пĕрле хăй саççетанийĕсенђе те çителĕклĕ таран пăхнă Оппоçитси пĕтĕм парттийе хирĕçлесе тĕрĕс мар ĕçлени çинђен вăхăтра ăнлантарса тăнă. Вĕсен ĕçĕсем йăнăш çулпа пынине кăтартса паракан решшенисем йăшăннă. Çавăн пек решшенисенђе мĕн çинђен каласа параççĕ-ши? Вăл тĕлĕшпе пулнă решшенисене хампа пĕрлех илсе килтĕм. Вăхăт сахал пирки, вĕсене пурне те вуласа кăтартма пултараймастăп. Пур решшенисенђе те оппоçитси меншевиксен çулĕ çине тухса кайнине кăтартаççĕ, оппоçитсире тăракансемпе хытăрах кĕрешме ыйтаççĕ, парттийе хирĕçлесе ĕçлекен оппоçитси ан пултăр тесе кăтартаççĕ.

Укомсен йулашки пленăмсем те Тĕпкомăн авкуст уйăхĕнђи пленăм ĕçĕсемпе хытă паллашрĕç. Пленăм тунă ĕçсене Уком пленăмĕсем хытă сӳтсе-йаврĕç. Пирĕн орканисăтси Ленин çулĕпех пырат, Тĕпком пленăмĕ йăшăннă решшенисене ырлатпăр, тесе сăмах татса пађĕç. Тĕпкомпа Контрољ Комиççи пленăмсем хыççăн хамăр пленăм пухаймарăмăр, ун пирки нимĕнле решшени те йăшăнаймарăмăр. Çапах та Оп ком пӳровĕпе Контрољ Комиççи преçитиумĕн пĕрлешӳллĕ ларăвĕнђе вăл пленăмăн ĕçĕсене ырласа, оппоçитсипе çине тăрса хытă кĕрешме ыйтрăмăр. Вăл тĕлĕшпе ырăнсене те кирлĕ таран тĕрĕссĕн ăнлантарса кăтартусем панă. Политтĕк ыйтувĕсене татах хытăрах вĕренме хушнă. Кунсăр пуçне тата Шупашкарта 90 çын пленăм решшенийĕсене тĕплĕн вĕренсе, пăхса тухаççĕ. Опком вăл йĕркепе мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тунă. Кунта партти „пусмăрлăхĕ“ çинђен каламалли те çук. Çапах та ку ыйтура пĕр пĕрне пĕлсе çитейменнисем пулкалаççĕ.

Малашне татах партти решшенисене вăхăтра пĕлсе, вĕренсе пырассине вăйлатмалла. Крушоксемпе шкулсенђе те çавсем çинђен вĕренмелли çине хытă пăхмалла.

Партти пур ђухне те çирĕппĕн пĕр сăмахпа ĕçлесе пырат. Район йĕрки çине куçас тĕлĕшпе те килĕшӳллĕ ĕçлерĕ. Çаксем пур те пирĕн партти çирĕппĕн, пĕр шухăшпа ĕçлесе пыни çинђен каласа параççĕ. Ђăнах та респуплĕке районлас ыйту тăрăх уйрăм калаçу пуçарса йаракансем пулкаларĕç: районри ĕçтăвкома уĕçтăвком правипе ĕçлесе тăмаллине туса çитерейменни—автономи ирĕкне кайалла ђакарни пулђĕ, тесе пăшăрханакансем пулкаларĕç.

Йалти йађеккăсем хаљ те пулин йĕзĕррĕн ĕçлесе пыраççĕ. Унта хаљ те пулин тĕрлĕ ђир-ђĕрсем пур. 3-мĕш çырура асăннисем (ĕçсе ӳсĕрлсе çӳрени, каланине итлеменни, тистсиплинăна пăхăнманни т. ыт.) хаљ те пĕтсе çитмен. Йертсе пыракансем хушшинђе тавлашусем пулни сисĕнет. Пĕр уйесра пӳро ђленĕсем хушшинђе хирĕçӳсем тухса кайнă, вăл майпа пӳро ĕçĕсем те ђăрмавлă пулса пынă.

Çавăн пеккисем пулкаласа иртни хăшпĕр комунисем ĕлĕкхи йевĕрлĕ пăтранђăклă ĕçлеме пăрахманни çинђен каласа парат. Кун пеккисем сахал пулкалаççĕ пулсан та, пирĕн хушăра уйрăм йĕркесĕрлĕхсем пулкалани çинђен палăртаççĕ.

## Парттин орканисатсиллӗ ӗҫӗсем.

Кун хыҫҫӑн парттин орканисатсиллӗ ӗҫӗсем ҫинҫен каласшӑн. Совет Сойусӗ тӗрекленсе пынӑ майӗпе ӗҫхалӑхӗн хастарлӑхӗ ӳсни те, тепӗр йенҫен Совета хирӗҫ вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ хайарланса ҫывхарни те, — хамӑрӑн кашни кунхи ӗҫсене вӑхӑтра ним ҫӑрӑнмасӑр хӑвӑрт тума хушаҫҫӗ. Пулса иртнӗ ӗҫсем умӗнҫе епӗр Ҫӑваш орканисатсин ҫирӗплӗхне тӗрӗслерӗмӗр. Епӗр ун ҫух, пирӗн орканисатси ҫӑн ҫӑнах хӑйӗн хыҫҫӑн ӗҫхалӑхне йертсе пынине куртӑмӑр. Ку пӗрремӗш. Иккӗмӗш, епӗр хуҫайствӑпа куҫттурӑ ӗҫӗсене ҫӑмӑллӑнах вырӑна кӗртсе пынине куртӑмӑр. Йулашкинҫен, Ленин ҫулӗпе пыракан Тӗпком йертсе пынипе, Ҫӑваш орканисатси пур ӗҫсене те кирлӗ таран туса пыни—епӗр ҫӑн-ҫӑнах ҫирӗп тӑнине кӑтартаҭ. Ку таранҫен туса пынӑ ӗҫсем те, ӗҫхалӑхӗн политтӗкле лару-тӑрувӗ те—епӗр тӗрӗс, ҫӑн ӗҫлесе пыни ҫинҫен енентерсе параҫҫӗ. Пуринҫен ытла, совет, суту-илӳ копператси ӗҫӗсем тӑрӑх епӗр нумай ӗҫленӗ.

Октӑпӗр револҫутсийӗ 10 ҫул тултарас умӗн пӗр пысӑк ӗҫ турӑмӑр. Вӑл—кив атминистратси тытӑмне пӗтерсе, ҫӗнӗ йӗрке—район ҫине куҫни. Ку ӗҫе вырӑна кӗртнӗ ҫӗрте пурте хутшӑнса ӗҫленӗ. Район йӗрки ҫине куҫасси ҫинҫен йалти пухусенҫе те, вулӑссенҫе те сӳтсе йаврӗҫ. Кунта парттире тӑманнисем те хытӑ ӗҫлерӗҫ.

Оппоҫитси парттийе—урӑхланса пыраҭ, массӑран уйрӑм ӗҫлет, хӗсӗрлесе ӗҫлет тесе айӑплама пӑхаҭ. Анҫах ӗҫсем вӗсем каланине хирӗҫлеҫҫӗ. Епӗр тунӑ ӗҫсем пур те оппоҫитси шухӑшӗсем вӑйсӑрри ҫинҫен ӗнентереҫҫӗ, оппоҫитсийе тӗппипе ҫӗмӗрсе тӑкаҫҫӗ. Пирӗн ҫитменлӗхсем ҫук мар. Вӗсем пур, вӗсене епӗр пытармастпӑр. Ҫитменлӗхсенҫен ҫи пысӑкки—епӗр хамӑр ӗҫе лайӑххӑн пайласа туманни, тунӑ ӗҫсене тӗрӗслесе пыманни пулаҭ. Парттин XI-мӗш конферентсийӗпе Опкомпа Контролҫ Комиҫҫин II-мӗш пленӑмӗн постановленийӗсене, пур ӗҫе те тӗплӗн, хӑвӑрт тума тытӑнас тӗлӗшпе, ӗҫӗн тухӑҫне хӑпартас тӗлӗшпе пӗтӗмпех туса ҫитерейменха епӗр. Пӑхса тухмалли ыйтусене тӗплӗн хатӗрлемеҫҫӗ. Ҫас ҫасах хӑш-хӑш партти комиттеҫӗсенҫи тӗрлӗ пайсен ӗҫӗсем пӗрпӗринпе ҫыхӑнса пымаҫҫӗ; парттиллӗ мар оркӑнсенҫе ӗҫ пушшех наҫартарах тӑраҭ. Ҫавӑнпа та партти орканисатсийӗсем йертсе пырас ӗҫе пӗтӗмпех ҫавӑрттарса илеймеҫҫӗ, пӗҫӗк ӗҫсемпе вакланса пӗтеҫҫӗ.

## Йалта ӗҫлесси ҫинҝен.

Районсене туса пӗтэрнӗ хыҫҫӑн, партти орканисатсийӗсен тӗп сатаҝӗ вӑл—Советсене ҝӑн ҝӑнах вӑйлатасси пулса тӑрат̆. Ку тӗлӗшпе пирӗн ӗҫ наҝар тӑрат̆. Ҫексисем ку таранҝҝенех хут ҫинҝе ҫеҫ тӑраҫҫӗ, ку ӗҫре ҫитӗнӳсем нумайах мар. Халӗ Совет ӗҫӗнҝе малтанлӑха пысӑк ҫитменлӗхсем те пулма пултараҫҫӗ. Кӑна халех систерсе хурас пулат̆. Районсем тунӑ пирки, кивӗ ҝикӗсем улшӑнаҫҫӗ. Нумайӑшӗсемшӗн ку ҫӗнӗ пулат̆. Вӑрман валеҫесси, ҫӗр ыйтӑвӗсене татса парасси, тата ытти ҫавӑн пек нумай ыйтусем тухса тӑраҫҫӗ. Пур кирлӗ ӗҫсене те, хресҝенсене вӑхӑтра туса памалла тӑвас пулат̆. Кӑна тумашкӑн, тӗпрен йертсе пырас ӗҫе те вӑйлатмалла. Тӗпри уҝрештенисенҝе ӗҫлекенсен татӑклӑ кӑтартусем парас пулат̆, райӗҫтӑвкомсене йертсе пырас ӗҫе вӑйлатмалла. Ку тӗлӗшпе Шупашкар хулинҝи партти йаҝейккисем тӗрлӗ майсем хатӗрленӗ ҫӗрте ӗҫлесе, пысӑк пулӑшусем пама пултараҫҫӗ. Респуплӗке районлас ӗҫе лайӑх туса иртерни — епӗр ку ӗҫре ексамӗн лайӑх тытнине кӑтартат̆. Халӗ ӗнтӗ пирӗн хресҝенсене епӗр аппарата ҝӑн ҝӑнах йал патне ҫывхартнине пурнӑҫра кӑтартас пулат̆. Районсем туса иртернӗ хыҫҫӑн ҝухӑнсем хушшинҝе ӗҫлес ӗҫ уйрӑм пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆, ҝухӑн хресҝенсем халӗ вӑтам хресҝенсемпе пӗрле хӑйсен инттересӗшӗн тӑма тата хытӑрах, тимлерех тытӑнаҫҫӗ. Ҝухӑн хресҝенсене ӗҫе хутшӑнтарасси ҫине, унӑн политтӗке пӗлнипе хастарлӑхне хӑпартасси ҫине халиҝҝен пӑхнинҝен ытларах пӑхас пулат̆. иртнӗ вӑхӑтра ҝухӑнсем хушшинҝи ӗҫре пирӗн нумай ҫитӗнӳсем пулҝӗҫ: ҝухӑн хресҝенсен пуххисене туса иртерес ӗҫ майланса пырат̆, ҝухӑн хресҝенсен ушкӑнӗсене туса пӗтернӗ, ҝухӑнсене тӗрлӗ ыйтусене хатӗрлес ӗҫе хутшӑнтарас ӗҫе вӑйлатнӑ, ҝухӑнсем парттипе пӗрле Совет ӗҫне хастарлӑнтарах хутшӑнса пыраҫҫӗ. Ҫапах та, ҝухӑн хресҝенсемпе ӗҫлес ӗҫ пӗтӗмӗшпе наҝар тӑрат̆ха. Ҝухӑнсем хушшинҝи ӗҫ кунран кунхи ӗҫ пулса тӑраймарӗха. Нумай ҫӗрте, Совет суйлавӗсем пулса иртнӗ хыҫҫӑн, ҝухӑнсем хушшинҝи ӗҫ сӳнсех ларнӑ. Нумайах пулмаст̆ сӑнаса тухнӑ 6 вулӑсра ҝухӑн хресҝенсен ушкӑнӗ пурӗ те иккӗ ҫеҫ орканисатсиленӗ: пӗр ушкӑнӗ — 2 хутҝен пухӑннӑ, тепри — пурӗ те пӗр хут ҫеҫ пухӑннӑ. Ҫак 6 вулӑсран 3 вулӑсӗнҝе

анђах ђухăн хресђенсен пуххисем туса иртернĕ, вĕсене те йалхуçайстви налокĕ пирки анђах пухнă. Ђухăнсен пухăвĕсем пулса иртнĕ çĕрте, ђухăн хресђенсем хастарлăн ĕçленĕ, йалсоветсене йалхуçайстви налокĕ тăрăх ĕç йенђен пулăшнă. Улатăр укомĕн пленăмĕнђе кăтартнă тăрăх, хăш пĕр йађейккăсенђе ђухăнсем хушшинђи ĕçре ку таранђђенех хăйаймасăр тăнисем, партти кăтартăвĕсене урăхла ăнланнисем пурри, нумай çĕрте палăрђĕ. Ђухăн хресђенсен ушкăнĕсем хут çинђе анђах тăраççĕ. Ђухăн хресђенсен пуххине кампанисем вăхăтĕнђе анђах туса иртереççĕ. Пухусене пухас ĕçре те нумай йăнăшсем туса пĕтерни пулнă. Хăш вырăнсенђе ђухăнсен пухăвĕсене уђитлĕсем, йалсовет претçетаттĕлĕсем пухса иртернĕ. Хăш вулăссенђе ђухăн хресђенсен пуххисене хупă пухусем туса иртернĕ, вăтам хресђенсене кăлара-кăлара йанă. Ђухăн хресђенсен пуххинђе сўтсе йавмалли ыйтусене малтанах хатĕрлемеççĕ. Хăш вулкомсем тата ђухăн хресђенсем хушшинђе ĕçлеме копперраттивсем, йалсовеђĕсем, т. ыт. орканисатсисем çумне те партти ђленĕсене уйăрса хунипе ђарăнса тăнă, йертсе пырас ĕç мĕн пулман. Çаксене пурне те пĕр çĕре илсен, çакна калама пултаратпăр: епĕр ку ĕçре кирлĕ таран пиçĕхсе çитейменха. Ку ыйту тăрăх Опком решшенийĕсене пур йађейккăсем те вĕренмен; нумай йађейккăсенђе кун пек решшенисем пуррине те пĕлмеççĕ. Ку постановлени çинђе ђухăн хресђенсем хушшинђе ĕçлесси çинђен тĕпĕ йĕрĕпех кăтартса панăђђĕ. Унта ђухăн хресђенсем хушшинђе ĕçлес ĕçре мĕнле сатађсем тăнине, орканисатси формисем çинђен тĕллесе кăтартнăђђĕ. Çавăнпа та епĕр кунта çĕнĕрен решшенисем йышăнасси çинђен калаçмастпăр, малтан йышăннă решшенисем тăрăх ĕçлесе пырас пулаť.

Парттире тăман активпа ĕçлесси те нађар тăраť. Районсем тунă пирки активпа ĕçлес ѐç уйăмах пысăк вырăн йышăнса тăраť. Çавăнпа та ку ĕçе лайăхлатма тăрăшас пулаť. Пирĕн хаљхи вăхăтра профсойус, копператси, тата ытти халăх орканисатсисене районлас ĕçе туса ирттермелле пулаť. Кунпа пĕрлех пирĕн ума ку ĕçсенђе ĕçлеме пултаракан, йертсе пыракан çынсене суйласа илес ыйту тухса тăраť. Кун çине те питĕ хытă пăхмалла пулаť. Ытти ĕçсем çинђе ђарăнса тăмастăп, м. т. йулашки хут кăтартса çырса панă çыру çинђе çитес вăхăтра мĕн-мĕн тулмаллисене пĕтĕмпех кăтартса панă, вĕсене пурнăçа кĕртмелле.

## Партти ăшĕнђи темократтипе йертсе пырасси.

Йулашкинђен, партти ăшĕнђи темократтипе партти йенђен ĕлхалăхне йертсе пырас ĕç çинђен. Ку ыйту ђи кирлĕ ыйту. Партти темократтипе лайăхăн усă курнипе, пĕтĕм ĕçе тĕрĕс çулпа илсе пынинђен,—партти умĕнђе тăракан ĕçсене хăвăрт вырăна кĕртсе пырасси те аван пулса пыма пултарать. Оппоçитси ун пирки мĕн калать-ши? Тротски й-па оппоçитси 1923-мĕш çултанпа—партти ăшĕнђи решим тем пекех хытă пăђăртать тесе кăшкăраççĕ. Хаљ, нумай пулмасть, Тротски йулташ Коминттерн Ĕçтăвомĕнђе акă мĕн каланă:—Тĕпком сиеса хăй майлă çынсене пухма хатĕрленет, вĕсем вара каллех çавсене суйласа хăвараççĕ те, малашне те çавăн пек кăшлама хушса хăвараççĕ. Унтан вăл,—нимĕнле орканисатси те ĕçсене кирлĕ таран сӳтсе-йавмасть, çӳлтен хушнине çеç туса пырать. Коминттерн Ĕçтăвком преçитиумĕ те çав шутрах тăрать, тенĕ Тротски. Оппоçитси каланă пек шутласан парттин нимле темократтийĕ те çук пулать. Пурне те персе ђикнĕ, пур çĕрте те вăйпа кĕртсе лартнăскерсем ĕçленĕ пек пулать. Вĕсем вара малтан хатĕрленĕ ресољутсисене йăшăнма сĕнеççĕ пулать. Партти масси çӳлтен хушнине çеç туса пырать пек. Оппоçитси калани тĕрĕс-ши? Фактăсем пĕтĕмпех урăхла калаççĕ.

Опкомпа Контрољ Комиççи тата укомсен пленăмĕсене кирек хăçан та партти акттивĕпе пĕрле туса ИРтеретпĕр. Уком пленĕмĕсенђе пур ђухне те пур комуниссем те пулаççĕ. Ийуњ уйăхĕнђе туса ирттернĕ конферентсисенђе пур çĕрте те Опкомпа Контрољ Комиççи ĕçĕсем çинђен кăтартнă. Токлатсем тăрăх конферентсисем çӳлти партти оркăнĕсем вырăнсемпе çыхăну çирĕп тытса тăрать тесе каларĕç. Орканисатси лайăхланса пынипе вырăнсене лăйăх йертсе пыни çинђен асăнмасăр хăвармарĕç. Ку тĕлĕшпе те ĕçсем аван пырать тесе ырларĕç. Партти ăшĕнђи темократийе кирлĕ таран пĕлсе сарнă хыççăн ĕнтĕ пур ĕçсем те аванланса пыра пуçларĕç. Кунсăр пуçне тата Контроль Комиççин ĕçĕсенђе те çитĕнӳсем пур. Çитĕнӳсенђен паллăраххисем ак çаксем пулаççĕ: парткоkлекuи саççетанисенђе айăплă комуниссен ĕçĕсене хайсене ђĕнсе пырса пăхса тухни йышланса пыни, партколлекин усă саççетанисем ђас ђасах пулни. Çаксене уйессенђи партти

конферентсисем те ырласа кӑтартса паҕӗҫ. Ӗҫе тӗплӗн пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн йашӑннӑ ресоҕутси малтан хатӗрлесе йашӑнни пулмасӑ.

Опком пур кампанисене иртернӗ ҕухне те вырӑнсене тӗп уҕрештенисенҕе ӗҫлекенсене йарса тӑнӑ.

Пысӑкрах ыйтусене кирек хӑҫан та малтан акттивра сӳтсе-йавма тӑрӑшнӑ. Вырӑнсене инструктӑрсем йарса, ӗҫсене тӗрӗслесе кӑтартса хӑварни те епӗр йертсе, ҫул уҫса пынине пӗлтерет.

Кунсӑр пуҫне тата Опком хӑй решшенисене пурне те вырӑнсене йарса тӑма тӑрӑшаӑ. Ҫапла майпа Опком мӗн туса тӑнине пурте пӗлсе, курса тӑҕӗҫ тетпӗр. Акӑ II-мӗш пленӑм хыҫҫӑн 3-мӗш ҫыру йатӑмӑр, унта килес вӑхӑтра мӗн тумаллине, мӗнле ӗҫлемеллине пӗтӗмпех кӑтартса панӑҕҕӗ. Вӑл ҫырува пур йаҕейккӑсенҕе те сӳтсе-йаврӗҫ. Ҫаксем пурте ӗнтӗ пысӑк ӗҫсене тунӑ ҫӗрте никам та айакра тӑманни ҫинҕен каласҫӗ. Район сиесӗсене тата ыттисене те пӗтӗм ӗҫҫыннипе пӗрлех туса иртертӗмӗр. Епӗр ӗҫсене кунталарнипех туса тӑмастпӑр. Пур ҕухне те тӗлне пӗлсе, тӗрӗссӗн туса пыратпӑр. Ҫаксем парттин шалти темократтийӗпе ҫителӗкнӗ усӑ курса ӗҫленине пӗлтереҫҫӗ. Ку сӑмахсемпе епӗр пирӗн ҫитменлӗхсем ҫук тесе каласшӑн мар. Вӗсем те нумай. Партти ӑшӗнҕи темократти ыйтувӗпе лайӑхрах палашманнисем те пур. Пӗлмен пирки вара, вырӑнсенҕе ӗҫлекенсемпе хӑшпӗр хастарлӑ ӗҫлекенсем те темократти йӗркинҕен тухаҫҫӗ. Вӑл ҕирпе епӗр кӗрешнӗ, малашне те кӗрешӗпӗр. Ҫав вӑхӑтрах темократти ирӗкӗпе выҕама та йурамасӑ, ӑна парттийе пӑсса йама паман тесе калатпӑр. Пирӗн хушӑра ӗҫлекенсенҕен хӑшпӗрисем ҫавӑн пек ӗҫлеме хапсӑнаҫҫӗ пулсан, епӗр вӗсене хӑйсен вырӑнне кӑтартса паратпӑр. Темократти урлӑ партти ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ӗҫлекенсем хатӗрлесе, хастарлӑха хӑпартса, Ленин пӗрлӗхне тытса тӑма вӑй илсе пыраӑ. Ҫавӑн пирки ӗнтӗ пур ӗҫсене те лайӑх йӗркелесе йертсе пыни кирлӗ.

Епӗр хаҕ Октӑпӗр уйавӗ ыран-пайан 10 ҫул тултарас умӗн пурӑнатпӑр, Ҕӑваш орканисатсин XII-мӗш конферентсипе Пӗтӗм Сойусри комуниссен (поҕшевиксен) парттийӗн XV-мӗш сиесӗ пухӑнас умӗн тӑратпӑр. Сиес питӗ йӑвӑр вӑхӑтра пухӑнаӑ. Оппоҫитси те парттийе иккӗнлентерсе йарса,

II-мĕш партти тăвас шутпа сотсиалисăм тăвас ĕç йăвăрлăх-семпе усă курма тăрăшат̆. Вĕсем парттипе кĕрешес тесе Совет влаçне хирĕç ĕçлекен çынсемпе пĕрлешсе ĕçлеме пăхаççĕ. Çавăнпа та хаљ пирĕн умра питĕ пысăк сатађ пур.

Вăл—пулас XII-мĕш конферентсипе XV-мĕш сйес патне Ленин хĕçпăшалĕпе тĕрекленсе çирĕппĕн пырасси. Çапла майпа Ленин çулĕ çинђе çирĕп тăракан Тĕпком тавра тимĕр карта çавăрмалла. Вара Ленин партти пĕрлĕхне тытса тăма хушнине вырăна кĕртĕпĕр. Вара Ђăваш орканисатсин XII-мĕш конферентсийĕпе П.С.К.(п) парттин XV-мĕш сйесĕ умĕнђе тăракан ыйтусене лайăх сӳтсе-йавса, тĕплĕн ăнласа илĕпĕр.

Окт̆апĕр револ̆утси тума хушнă ĕçсене вырăна кĕртсе çитерĕпĕр.

(Пурте хытă алă çупаççĕ)

## ПӐТШЕТ ÇИНЂЕН*)

Пирĕн Республĕкĕн тупăшсем мĕн пекши? Тăкаксене витме пирĕн тупăшсем çитеççĕ-ши? Пирĕн тăкаксене саплама мĕљйун ытла укçа çитеймест. Ку пĕр йенђен. Тепĕр йенђен епĕр хамăр ђенттăра кăшт укçа паратпăр пек. Мĕн ђулши пирĕн тупăш укçи? Çак иртнĕ пӳтшет çулĕнђе 7.158.308 тенкĕ шутланатђĕ, 1927—28-мĕш çулта 8.375.550 тенкĕ пухăнмалла пек, тупăш укçи 17% ытла пухăнас пек. Тăкаксем тĕлĕшĕнђен илсен, 1926—27-мĕш çулта 8.687.532 тен. çитнĕ, 1927—28-мĕш çулта 10,4% мала пулать. Çапла майпа 26—27-мĕш пӳтшет çӳлĕнђе пулнă тăкаксене саплама 1.879.481 тенкĕ укçа çитеймен пулать.

### 1927—28 мĕш çулхи патшалăх пӳтшеђĕ.

Халĕ ĕнтĕ 1927—28-мĕш çулхи пӳтшет çинђен. Ђенттăр кăтартнă тăрăх патшалăх тупăшĕ çакăн ђухлĕ пулмалла тесе шутланă:

| Тупăш йађĕсем | 1926—27 мĕш çул | %% | 1927—28 мĕш çул | %% | Хутшăнни |
|---|---|---|---|---|---|
| Вăрман тупăшĕ . . | 2.765.000 | 47,9 | 2.765.000 | 40,7 | — |
| Актсис . . . . . . | 1.572.600 | 27,3 | 2.504.400 | 36,9 | 59,3 |
| Патшалăх. промышлĕннăç налокĕ . . | 467.670 | 8,1 | 520.500 | 7,7 | 11,3 |
| Й.-Х. налокĕ . . . . | 308.000 | 5,3 | 397.000 | 5,8 | 28,9 |
| Ытти тупăшсем . . | 659.585 | 11,4 | 606.965 | 8,9 | —8,0 |
| Пĕтĕмпе . . | 5.772.855 | 100 | 6.793.865 | 100 | 17,7 |

Патшалăх пӳтшеђĕн тупăш пайĕ, ђенттăр кăтартса панă тăрăх 17,7% ӳсет. Тупăш ӳсни—актсис шуђĕпе ӳсет.

Йалхуçайстви налокĕ, ђенттăр кăтартса панă тăрăх, 1926—27-мĕш çулта 308.000 тенкĕ пухăнмалла пулнă, вăл

*) 1927—28-мĕш çулхи патшалăх пӳтшеђĕ çинђен 20-мĕш страницсăра, вырăнти пӳтшет умĕн кĕмелеђђĕ. Унти кĕреймен пирки, уйрăм хушса кăларатпăр. Рет.

405.000 тенкĕ пухăннă: 1927—28-мĕш çулта йалхуçайстви налокне 397.000 тенкĕ пухма кăтартнă. Анђах çкиткă, љкоттăсем пулнă пирки налок пурĕ те 368.000 тенкĕ анђах пухăнасса кĕтме пулаť. Урăхла каласан й.-х. налокĕ 1927—28-мĕш çулта 28,9% хутшăнни пулмасť, 9,7% каťалаť.

**Пуçтарăнакан укçасем çапла саланаççĕ.**

| Тăкак йађĕсем | 1926—27 мĕш çул | % | 1927—28 мĕш çул | % | Ўсни |
|---|---|---|---|---|---|
| Атминистратсипе сут тăкакĕсем . . | 2.322.232 | 26,7 | 2.031.008 | 21,2 | —17,2 |
| Кулђтурăпа пулăшу . . . . . . . . | 4.211.560 | 48,5 | 4.950.859 | 51,6 | +17,5 |
| Хуçайствăпа происвотствă . . . . . . | 1.965.237 | 22,6 | 2.405.177 | 25,1 | +22,4 |
| Ыттисем . . . . . . . | 188.503 | 2,2 | 210.300 | 2,1 | +6,8 |
| Пĕтĕмпе . | 8.768.503 | 100 | 9.588.344 | 100 | 10,4 |

Çапла ĕнтĕ патшалăхпа вырăнти пўтшет укçисем ђи малтан кулђтурăпа пулăшу ĕçне, тата хуçайствăпа происвотствă ĕçне кайаççĕ.

**Тăкаксем.**

Патшалăх пўтшетĕнђи укçа пĕрлешсе, тата пĕрлешмесĕр тăракан комиссариатсене çакăн пек кирлĕ ĕçсем валђи кайаť:

| Тăкак йађĕсем | 1926—27 мĕш çул | % | 1927—28 мĕш çул | % | Хутшăнни |
|---|---|---|---|---|---|
| Атминистратсипе сут тăйакĕсем . . | 829.890 | 34,9 | 695.928 | 27,8 | —16,1 |
| Кулђтурăпа пулăшу . . . . . . . . | 823.252 | 34,6 | 990.759 | 39,5 | 20,3 |
| Хуçайствăпа происвотствă . . . . . . | 723.732 | 30,5 | 820.077 | 32,7 | 13,3 |
| Пĕтĕмпе . . | 2.376.874 | 100 | 2.506.764 | 100 | 5,5 |

1927-28-мĕш çулхи патшалăх пӳтшетĕнђи пĕрлешсе тата пĕрлешмесĕр тăракан комиссариатсем вађђи (ССРС çметтисĕр) 5,5% хутшăннă. Кунта Халăх Комиссарĕсен Канашĕн реçервнăй фонтĕнђен уйăракан тата ССРС çметтинђен сарăмсăр тăкаксем вађђи уйăрнă укçасем кĕмеççĕ. 1926-27- мĕш çулта çаксенђен 350.257 тенкĕ панă, 1927—28-мĕш çулшăн мĕн ђухлĕ парасси паллă марха.

Ђăваш респуплĕк çметти тăрăх патшалăх пӳтшетĕн расхут пайĕ 1927-28-мĕш çулта, пĕрлешсе тăман комиссариатсен вађђи, ЁХИ, Финас Комиссариађĕ, Тĕп Статтиçтĕк Управленийĕ, Ĕç Комиссариађĕ, тата Промышленнăçпа Сутуиђӳ Комиссариађĕсемсĕр пуçне 9,6% ӳсет. Çак вăхăтрах РФССР пĕрлешӳллĕ ветăмствисенђе, управлени аппарађĕсен расхут пайĕ 12% ђакаť. РФССР патшалăх пӳтшеђĕ вăтамран 9% ӳсет.

1926-27-мĕш çулхи патшалăх пӳтшеђĕн тупăш пайĕ 9 уйăх хушшинђе 78,1% тулнă. Налок тупăшĕ—89,5%, налок мар тоххотсенђен—66,5%. Патшалăх пӳтшеђĕн расхут пайĕ çав вăхăтрах 68,4% тулнă.

## ТУПМАЛЛИ.

*стр.*

1. Вăрçă хăрушăлăхсем умĕнђе ђăваш ĕçхалăхĕ хăйĕн тĕрĕлĕхне тĕрекслерĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Пирĕн йалхуçайстви вăрахăн та пулин—ӳсетех. . 9
3. Ушкăнлă хуçайствăсем . . . . . . . . . . . . . . 10
4. Йалхуçайстви копператсийĕ . . . . . . . . . . 11
5. Йалхуçайстви панкки хресђен хуçайствине вăйлатас ĕçре пысăк тĕкĕ пулса тăрат . . . . . . . . . . . . 12
6. Ђухăнсене пулăшасси . . . . . . . . . . . . . . 13
7. Çураки мĕнле иртрĕ . . . . . . . . . . . . . . 14
8. Кивçен пана вăрлăха кайалла пухас ĕç . . . . . 14
9. Йалхуçайстви налокĕ . . . . . . . . . . . . . . 15
10. Промышлĕннăç . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
11. Суту-илӳпе пасар . . . . . . . . . . . . . . . 18
12. Копператтивсем мĕнле ĕçлеççĕ . . . . . . . . . 19
13, Тырпул хатĕрлессипе тавар кӳресси . . . . . . 20
14. Вырăнти пӳтшет . . . . . . . . . . . . . . . . 20
15. Тирпейлĕх решимĕ . . . . . . . . . . . . . . . 22
16. Сайомсем çинђен . . . . . . . . . . . . . . . 23
17. Профсойус ĕçĕсем çинђен . . . . . . . . . . . 24
18. Халăха вăрçă ĕçне вĕрентесси . . . . . . . . . 25
19: Уђрештенисене ђăвашлатасси . . . . . . . . . . 26
20. Хĕрарăмсен хушшинђи ĕç . . . . . . . . . . . . 27
21. Акиттатсипе проппакантă ĕçĕ . . . . . . . . . 28
22. Ĕçйалкорсен хастарлăхĕ ӳсет . . . . . . . . . 32
23. Парттири оппоçитсин сийенлĕ ĕçĕсем . . . . . . 33
24. Ђăваш орканисатсин ĕçĕсем . . . . . . . . . . 37
25. Парттин орканисатсиллĕ ĕçĕсем . . . . . . . . 39
26. Йалта ĕçлесси çинђен . . . . . . . . . . . . . 40
27. Партти ăшĕнђи темократтипе йертсе пырасси . 42
28. 1927—28-мĕш çулхи патшалăх пӳтшеђĕ . . . . . 45